«Хыпар» Издательство çурчĕн çамрăк корреспонденчĕсен слетне хутшăнакансене хĕрӳллĕ салам!

ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

19 (4381) №, 2014, çу, 15 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

# Кашни кун хĕвел çутипе savăнар



**Шупашкарти 6-мĕш шкулта вĕренекен Айдар Андреев вăрçă çинчен каласа панине итлеме çав тери юратать. Класс ертӳçи Валентина Васильевна Францева та акă пур ачана та Атăл хĕрринче иртекен Çĕнтерӳ парадне кайса курма сĕнчĕ.**

– Чечек илме те ан манăр. Ветерансене çеçке парса кăмăлĕсене хăпартлантарăр, – канаш пачĕ педагог пĕрремĕшсене.

Çакăн хыççăн Айдар канăçне йăлтах çухатрĕ. Ара, парада пĕччен каяймасть-çке-ха вăл, çулĕпе кĕçĕнскер шикленет. Каяс тесен те амăшĕ ирĕк парас çуккине чунĕпе туять. «Аннен вăхăт пур-ши манпа çӳреме. Ах, хăçан пысăкланăп-ши, хам тĕллĕн кирек ăçта çитме пултарăп вара», – çапла шухăша путнă май килелле утрĕ арçын ача.

...Çу уйăхĕн 9-мĕшĕ. Ирех савăнăçлă Айдар. Палăртнă вăхăт çитсен амăшĕпе Атăл хĕррине васкарĕ. Алла туя тытнă ветерансем аран кăштăртатса уткаланине курсан арçын ача çав тери шеллерĕ вĕсене.

– Анне, анне, вĕсем пирĕн пуласлăхшăн, мирлĕ пурнăçшăн тăрăшнă-çке. Хура-шурне чылай курнă вăрçă вăхăтĕнче, апла пулин те каялла чакма шутламан. Тăшмана хамăр çĕр çинчен пĕр çын юлмиччен хăваланă. Тăван çĕр-шывшăн кашни кун, кашни сехетре кар тăнă, – терĕ Айдар юратнă çынни çине шăтарасла пăхнă май.

Акă хăюлăх çитерсе пĕр ветеран патне чупса пычĕ арçын ача. Класс ертӳçи Валентина Васильевна каланине асра тытса, ун еннелле хĕрлĕ гвоздика тăсрĕ.

– Пире тăнăç пурнăç парнеленĕшĕн, – терĕ вăл унăн медалĕсемпе орденĕсем çинчен куçне илмесĕр.

– Тавах, ачам, тавах! Мана ырă суннăшăн савăнса пĕтерейместĕп. Эпир курнă пурнăçа сирĕн курмалла ан пултăрччĕ. Кашни кун хĕвел çутипе, аçу-аннӳпе, тăванусемпе савăнса пурăнăр. Кашни кун, кашни сехетре, – терĕ Петр Гурьевич Кольцов ачана çурăмĕнчен лăпканă май.

Айдар Петр Гурьевичпа асăнмалăх сăн та ӳкерĕнчĕ.

– Ку сăн ӳкерчĕке хамăр класра вĕренекенсене кăтартăп. Ан тив, кăшт ăмсанччăр та вĕсем мана. Чăн-чăн паттăр салтакпа пурте сăн ӳкерĕнме пултараймаççĕ вĕт-ха. Петр Гурьевич, сăмах паратăп, эпĕ те сирĕн пекех Тăван çĕр-шыва юрăхлă çын пулатăп, – хăпартланчĕ пĕрремĕш класс вĕренекенĕ Айдар Андреев.

*Элиза ВАЛАНС.*

**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Паянхи номерте:

• «Тăван ялăм çапла пуçланнă» конкурс малалла пырать.



4 стр.



• «Ăстасем» кăларăм ал ĕç маçтăрĕсене ырă канаш парать.

7 стр.

• Вун тăватă çулти паттăр Марат.



8 стр.



• «Сăвăпа чĕрем юрлать» ярăм çамрăк поэтсен ĕçĕсене яланах хапăл.

9 стр.

• Çумăр айĕнче тупнă телей.



10 стр.

# Аслисенчен тӗслӗх илетпӗр



Йӗпреҫ районӗнчи Чӑваш Тимеш шкулӗнче вӗренекен пӗр тӑван Настьӑпа Денис Вяцковсем хаҫат-журнал вулама кӑмӑллаҫҫӗ. Унсӑр пуҫне вӗсем «Тантӑш» хаҫатпа, «Тетте» журналпа ҫыхӑну тытма ӑнтӑлаҫҫӗ.

– Аслӑ классенче вӗренекенсенчен тӗслӗх илетпӗр. Вӗсем, авӑ, пур ҫӗрте те хастар. Пирӗн шкулта «Тантӑшпа» ҫыхӑну тытакан чылай. Вӗсене хавхалантарса та пулӑшса пыраканӗ – чӑваш чӗлхипе литератури вӗрентекен, Надежда Алексеевна Евдокимова. Эпир те малашне шӑллӑмпа тата та кӑсӑкларах материалсем ярса парас тӗллевлӗ», – теҫҫӗ Настьӑпа Денис.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*

**АВТОР сӑн ӳкерчӗкӗ.**

# Ҫут ҫанталӑка упрасчӗ

*Эп, чӑваш ачи, саватӑп*
*Хамӑрӑн чӑваш ҫӗрне*
*Вӑл кипке те ман, сӑпка та*
*Ӑна манмӑп ӗмӗрне.*
***(Петӗр Хусанкай)***



Манра чӑваш юнӗ чупать. Паян чӑваш хушшинче хастар чылай. Вӗсем нумай вӗренсе ӑслӑ ҫынсем пулнӑ. Ҫавсем халӑхӑмӑра ӑс парса, вӗрентсе тӑраҫҫӗ те ӗнтӗ.

Асаттесем: «Тӑван тавралӑхри ҫут ҫанталӑк – сывлӑх тӗкӗрӗ", – тенӗ. Ҫакна вӗсем питӗ лайӑх ӑнланнӑ ҫав. Этем ҫут ҫанталӑкран вӑй-хӑват илет, ҫавӑнпа вӗсем ӑна хисепленӗ. "Эпир ҫӗртен пулнӑ, ҫӗрех пулатпӑр та", – теҫҫӗ халӗ те ватӑсем.

Халӗ вара ҫӳп-ҫапа кирлӗ-кирлӗ мар ҫӗре тухса пӑрахаҫҫӗ. Ҫут ҫанталӑк хӑйне упраманнисене тавӑрать. "Уй куҫлӑ, вӑрман хӑлхаллӑ", – теҫҫӗ ватӑсем. Эпир ҫак сывлӑшпа сывлатпӑр. Ӳпкене ларсан чирлетпӗр. Сывлӑха хамӑрах пӗтеретпӗр.

Ӗлӗк-авал этем ҫут ҫанталӑка ҫакӑн пек вараламан, ҫавӑнпа хӑйсен пурнӑҫӗ тӑван таврапӑхран килнине туйнӑ.

Тӗрӗ те чӑваш халӑх пултарулӑхӗн мӗн авалтан аталанса пынӑ тата ҫӳллӗ пусӑма ҫӗкленнӗ илемлӗхӗсенчен пӗри. Эпӗ хам та тӗрлеме кӑмӑллатӑп. Акӑ "Виҫӗ хурӑн" пейзажа тӗрлесе пӗтернӗпе пӗрех.

***Екатерина САРБАЕВА.***

Сӗнтӗрвӑрри районӗ,
Хуракасси шкулӗ.

# «Тантӑш» хаҫат манӑн пурнӑҫра

Хаҫатӑн ҫамрӑк корреспонденчӗсен слечӗн делегацийӗн йышӗнче хамӑр шкул ачисен хушамачӗсене курсан чунтанах савӑнтӑм. Вӗренекенсем те хӗпӗртерӗҫ, ҫу уйӑхӗн 15-мӗшӗ хӑвӑртрах ҫиттӗрччӗ тесе ӗмӗтленме пуҫларӑмӑр.

Хама илес пулсан, «Пионер сасси» хаҫатпа тахҫанах туслӑ эпӗ. Атте, Вячеслав Александрович Александров, пире валли Мускавра тухакан пур ача-пӑча хаҫат-журналне те ҫыранса паратчӗ: "Веселые картинки", "Мурзилка", "Пионерская правда", "Комсомольская правда". Ачасем валли чӑвашла хаҫат тухассине пӗлсен пире пилӗксӗмӗре ҫийӗнчех хаҫат ҫыранса пачӗ. Юратнӑ кӑларӑм эрнере икӗ хутчен тухатчӗ, эпир ӑна пӗрпӗрипе тупӑшсах вулаттӑмӑр. Ҫиччӗмӗш класра вӗреннӗ чухне пӗррремӗш хут хаҫата ҫырса пӑхрӑм. «Июлӗн 25-мӗшӗ» конкурса заметка ҫырса ятӑм. Вӑл пичетленчӗ, ҫав тери хӗпӗртерӗм, кайран тепре ҫыртӑм, вӑл та хаҫатра кун ҫути курчӗ. Тепрехинче вара пичете юрӑхлӑ пулаймарӗ. "Материал кая юлнӑ", – тесе хурав пачӗҫ. Тем сӑлтавпа пӗр тапхӑр ҫыхӑну тытаймарӑм. Кӳршӗ ялти Нина Спиридонова ҫав ҫул хаҫат лауреачӗ ята та тивӗҫрӗ.

Хаҫатпа тепӗр хут туслашасси пӗлӳ ҫуртӗнче ӗҫлеме тытӑнсан пуҫланчӗ. Мана тӳрех шкулти интернациллӗ туслӑх клубне ертсе пыма хушрӗҫ. Шӑп ҫавӑн чухне «Пионер сасси» ирттерекен тӗрлӗ акцие хутшӑнма пуҫларӑмӑр. Хамӑр ӗҫсем пирки хаҫата ҫырма тытӑнтӑмӑр. Шкул ачисене те туслаштартӑм. Штанашри вӑтам шкулӑн ҫӗнӗ ҫурчӗ хута кайсан «Пионер сасси» хаҫатран та кӗҫех корреспондентсем килчӗҫ, пирӗн шкул пирки материал пичетленчӗ. Вӗсем ун чухне пурне те хаҫатпа туслашма чӗнсе каларӗҫ.

«Пионер сасси» хаҫат пулӑшнипех «Кӑвакарчӑн» туслӑх клубӗн икӗ президенчӗ Галя Федорова «Артек» пионер лагере, Наташа Ишмейкина «Орленок» лагере кайма тивӗҫлӗ пулчӗҫ. Хӗр ачасем иккӗшӗ те аслӑ пӗлӳ илсе пурнӑҫра хӑйсен вырӑнӗсене тупрӗҫ, Наташа Ишмейкина аспирантурӑра та вӗренчӗ.

1980 ҫултанпа шкулта вӑй хуратӑп, акӑлчан чӗлхи вӗрентетӗп, пушӑ вӑхӑтра чӑваш хаҫат-журналӗпе ҫыхӑну тытатӑп.

Хаҫатри материалсемпе класс сехечӗсем ирттернӗ чухне те час-часах усӑ куратӑп. Чӑваш Республикин писателӗсен Союзӗн, Чӑваш халӑх ӑс-хакӑлӗпе ӳнер академийӗн членӗ, Хисеплӗ тавра пӗлӳҫӗ ята та тивӗҫнӗ пултартӑм. Йӑлтах «Пионер сасси» («Тантӑш») хаҫата пула. Тӗрлӗ тема хускатнӑ, викторинӑна хутшӑннӑ, альбом хайланӑ, заметка шӑрҫаланӑ, ачасене хаҫатпа туслаштарнӑ шкулта ӗҫлеме пуҫланӑранпа! Пурнӑҫ улшӑннӑҫемӗн ачасем те улшӑнсах пыраҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсемшӗн ытларах вӑй хума тивет. Кашни ачан талант пур, ӑна вӑхӑтра уҫма пӗлмелле-ҫке. Ан тив, вӑл ҫыравҫӑ пулаймӗ, пурӑна киле ҫырма та пӑрахӗ, анчах та ачалӑхри хавасла самантсене манса каймӗ. «Еплерех юмахсем ҫырнӑ эпӗ, нивушлӗ хамах тӑрӑшнӑ?» - тӗлӗнет хӑшӗ-пӗри тӗл пулсан сӑмах ҫӑмхине сӳтнӗ май.

Ачасен заметкисене темиҫе альбома пухса вырнаҫтарнӑ, вӗсен хайлавӗсемпе юмахӗсенчен «Тӗлӗнтермӗш юмахсем» кӗнеке пичетлесе кӑларма пултартӑм, унта 50 автор. Хаҫат ирттерекен конкурссене чылай чухне хам та хутшӑнатӑп. Хаҫат-журнала та яланах ҫыранса илетӗп. «Манӑн ялӑн ҫичӗ тӗлӗнтермӗшӗ» конкурсра Штанашпа Упукушкӑнь ялӗсем пирки ҫырса кӑлартӑм, хам кун ҫути курнӑ Етӗрне районӗнчи Кӑкшӑм ялӗ пирки те ҫырас кӑмӑлӑм пур-ха.

Пирӗн ҫемьере икӗ хӗрпе пӗр ывӑл. Ачасене юратнӑ кӑларӑмсем ирттерекен конкурссене яланах хутшӑнтарма тӑрӑшнӑ. Вӗсем час-часах ҫӗнтеретчӗҫ. Иринӑн та, Алинӑн та парнесем – «Андриян Николаев» кӗнеке пур, Алешӑн – Светлана Савицкаян тата «Города Чувашии» кӗнекисем. Светлана Савицкаян кӗнекине шкулти татах та икӗ вӗренекен тивӗҫнӗччӗ.

2003 ҫулта «Ҫыру ҫырсамӑр салтаксем патне» акцие хутшӑнтӑмӑр. Ачасен заметкисем хаҫатра кун ҫути курчӗҫ. 1997 ҫулта «Чӑваш патшалӑх университетне пӗлетӗн-и эсӗ?» викторинӑра Ирина ҫӗнтерӳҫӗ пулчӗ. Николай Овчинников художник 85 ҫул тултарнине халалласа ирттернӗ конкурсра Алеша Зотовпа Марина Росскова хавхалану парнине тивӗҫрӗҫ. Шупашкара уява еплерех нушаланса ҫитнине халӗ те манаймастпӑр. Машина ҫинчен тепӗр машинӑна куҫса, шӑнмаллипех шӑнса кӳтрӗмӗр! Асӑнмалӑх сӑн та ӳкерӗннӗччӗ.

«Саккун урлӑ сиксе каҫаймӑн» конкурс ҫӗнтерӳҫи пулса «Лидер» кану лагерьне кайма путевка ҫӗнсе илчӗ Алеша. Унта ӑна килӗшнӗ! Халӗ те ҫав кунсене яланах ӑшӑ кӑмӑлпа аса илет.

Пирӗн шкул ачисем «Тантӑшӑн» 70 тата 75 ҫулти юбилейӗсенче пулса савӑнчӗҫ. Шӑп маларах хаҫатӑн малтанхи редакторӗпе 93 ҫулти Илья Максимович Алтын-Башпа паллашрӗҫ, Василий Давыдов-Анатри, Нина Артемьева, Юлия Силэм, Василий Эктель, Георгий Ирхи писательсемпе тӗл пулчӗҫ.

Хаҫат редакцине чунтан тав сӑмахӗ калатӑп. Алеша ывӑлӑм 2003 ҫулта «Суров закон, но он закон» викторинӑна хутшӑнса Пӗтӗм Раҫҫейри «Артек» лагере кайма путевка ҫӗнсе илчӗ. «Тавах сана, аннеҫӗм, пире конкурссене хутшӑнтарнӑшӑн, тӗнче шайне тухма пулӑшнӑшӑн!» – тет вӑл халӗ те ачалӑха аса илсе. Тӗпренчӗкӗмсем халӗ пурнӑҫ ҫулӗ ҫине тухнӑ. Алина шкулта хам пекех акӑлчан чӗлхи вӗрентет, Ирина институтра вӑй хурать. Алеша кӑҫал магистратура пӗтерет.

Редакци ӗҫченӗсене шкул ачисен заметкисене хаҫатра кун ҫути курма пулӑшнӑшӑн чунтан тав тӑватӑп!

«Тантӑшӑн» кун-ҫулӗ вӑрӑм пултӑр, вӑл ачасене куллен пулӑшса пытӑр, унӑн тусӗсен йышӗ ӳстӗр!

***Галина ЗОТОВА.***

Хӗрлӗ Чутай районӗ,
Штанаш шкулӗ.

Тантӑш
чӑваш ачисен хаҫачӗ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чӑваш Республикин Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерстви; Чӑваш Республикин Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство ҫурчӗ» Чӑваш Республикин автономи учрежденийӗ.

● ХАҪАТ ИНДЕКСӖ:
54802 - (ҫур ҫула) - Чӑваш Республикинче,
11466 - республика тулашӗнче.

● АДРЕС
428019, Чӑваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13,
VII хут.

● "Хыпар" Издательство ҫурчӗ" АУ техника центрӗнче калӑпланӑ."Чувашия" ИПК" АУО типографийӗнче пичетленӗ.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРӖ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТӖП РЕДАКТОР
А.ЛЕОНТЬЕВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тӗп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, ҫырусемпе тата юнкорсемпе ӗҫлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайӗ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайӗ: | 56-11-80 |
| право, кӑмӑл-сипет пайӗ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВҪИ
В.СТЕПАНОВ

● КАЛӐПЛАВҪӐ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
2344 экз.
ҫав шутра Чӑваш Республикин тулашӗнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 1728
Пичете ҫу уйӑхӗн 14-мӗшӗнче алӑ пуснӑ.

● ПИРӖН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантӑш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллӑпа реклама материалӗсене палӑртнӑ

Пичете графикпа 15 сехетре алӑ пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алӑ пуснӑ.

# Пăлханса шăрçалаттăм йĕркесене

Сакăр вун çиччĕри Петр Гурьевич Кольцова уяв кунĕ кăмăлла кайрĕ.

– Хисеп туса праçнике йыхравланиех мĕн тери савăнтарчĕ. Ăшă сăмах калани, саламлани чуна çемçетрĕ. Çитменнине çанталăкĕ хĕвеллĕ те ăшă тăчĕ. Вăл та пире, ветерансене, сума сурĕ ахăртнех, – терĕ вăл хăй шухăшĕпе паллаштарнă май.

Елчĕк районĕнчи Кӳлпуç ялĕнче ултă ачаллă çемьере кун çути курнă паттăр салтак. Тăван çĕр-шыва ирсĕр тăшман тапăнса кĕрсен вăл та фронта тухса кайнă. Хаяр çапăçусенче пĕрре мар аманнă, апла пулин те пуçне усман вăл. Шав малалла ăнтăлнă. Паттăрлăхшăн орден-медале те тивĕçнĕ.

Вăрçă хыççăн çар училищинче ăс пухнă. Уралти патшалăх университечĕн журналистика факультетĕнчен те ăнăçлă вĕренсе тухнă вăл. Хыççăн «Советская Чувашия» хаçатра вăй хума тытăннă. Шăп çакăнта вăрçă вăхăтĕнчи самантсене аса илсе тĕрлĕ жанрлă материалсем çырнă.

– Чуна ыраттарса, хумханса та пăлханса шăрçалаттăм хамăн хаклă йĕркесене. Тепĕр чухне çурăм тăрăх сив тар та чупса иртетчĕ. Апла пулин те хама алла илсе пуçăннă ĕçе вĕçне çитереттĕмех, – терĕ ветеран ассăн сывланă май.

Петр Гурьевич Мускаври Хĕрлĕ лапамри парада та хутшăннă. Вăл – Раççей Федерацийĕн журналистсен союзĕн членĕ.

## Анне! Пирĕн атте вилнĕ-ĕ-ĕ!

Сакăр вун пиллĕкри Роза Кирилловна Кириллова уява кайма хатĕрленнĕ май хаш та хаш сывларĕ.

– Ах, çак çула çитессе нихăçан та шухăшламан. Пĕр-пĕр кун вилĕм алăкран килсе шаккать пулĕ те-ха, – терĕ çаплипех лăпланаймасăр.



Иккĕмĕш класра вĕренекен Яна мăнукĕ чăр пăхрĕ те ăна ыталаса илчĕ.

– Кукамай, урăх... урăх вилĕм çинчен аса илнĕ ан пултăр. Паян пысăк уяв. Санăн савăнмалла çеç. Акă шкултан ăнăçлă вĕренсе тухсан аслă вĕренӳ заведенине вĕренме кĕрĕп. Тухтăр профессине алла илсен эсĕ чир-чĕр мĕн иккене самантрах манăн. Тата сана çамрăкланмалли эмел ĕçтерĕп. Курса тăрăн, санран телейлĕ çын пулмĕ, – терĕ хĕр ача кукамăшĕ çумĕнчен хăпаймасăр.

– Кукамай, тархасшăн, вилĕм пирки калаçса чуна ан хурлантар. Вăл килмест сан пата. Эпир яланах алăка питĕрсе çӳретпĕр, çавăнпа иртсе каять вăл пирĕн хваттер тĕлĕнчен.

– Юрĕ, ачам, юрĕ. Эпĕ хам та пурнăçа çав тери юрататăп. Сире те. Шел, иртнĕ вăхăта аса илсен пĕрех чун ыратса килет, – терĕ Роза Кирилловна мăнукĕ çине юратса пăхнă май.

Çĕрпӳ тăрăхĕнче тăхăр ачаллă çемьере çуралнă Роза Кирилловна. Вăрçă пуçлансан ялсенче йывăр пурнăç хуçаланнă. Ашшĕпе пиччĕшĕ фронта тухса кайсан туслă çемье йăлтах хуйха ӳкнĕ.

– Ачамсем, эпĕ вăрçа каятăп. Унтан таврăнма пултарассине шантарса калаймастăп. Аннĕре итлĕр, пулăшăр. Ĕçлĕр, çын пулăр, – каласа хăварнă ашшĕ çула тухас умĕн ачисене.

Киле час-час çыру çырнă, фронтри хыпарсене пĕлтерсех тăнă. Пĕррехинче вара вăл çырнă йĕркесем шухăша янă. «... Госпитальте выртатăп. Аманнă урана иккĕмĕш хут операци турĕç. Çăмăллăх пулмарĕ-ха. Ура çаплипех çĕрет. Суран çав тери ыратать. Кĕçех тепĕр операци тума хатĕрленеççĕ. Темле, çăлса хăвараймаççĕ пулĕ мана», – тенĕ вăл юлашки çырăвĕнче.

Чăвашсен пысăк уявĕ – Питрав кунĕ. Пурте хитре тумланса праçнике васканă. Акă почтальонка Розăна ашшĕ вилнĕ çинчен хыпарлакан хута тыттарса хăварнă. Палăк пек хытса тăнă хĕр ача. Куççульне çăта-çăта пӳрте кĕнĕ те тăванĕсене усал хыпар пĕлтернĕ.

– Аннене пĕлтерес марччĕ, çавăнпа чунăрсене хытарăр. Куççуль ан кăларăр, кулянтарас килмест, – тенĕ хăй те тăна кĕреймесĕр.

Шăп çак вăхăтра пӳрте амăшĕ кĕрсе тăнă.

– Ара, паян уяв. Канмалли кун чухне Питрава кайса килĕр. Çынпа пĕрле савăнăр. Мĕн килте лармалли пур, – тенĕ ачисене.

Пĕри те пĕр сăмах чĕнмен. Пуçĕсене чиксе куççулĕсене пытарнă вĕсем. Унтан Роза чăтайман, кăшкăрса макăрса янă.

– Анне-е-е-е! Пирĕн атте вилнĕ-ĕ-ĕ-ĕ! – тесе ĕсĕкленĕ.

Вăйран кайнă амăшĕ тенкел çине лаках ларнă та тăнне çухатнă.

...Вăрçă чарăнсан пиччĕшĕн, Петьăн, хыпарсăр çухалнă хутне илнĕ. Каллех пысăк хуйхă килсе çапнă вĕсене.

– Сталинград çывăхĕнчи çапăçăва пĕрле кĕтĕмĕр. Эпир унтан тухрăмăр, Петьăна каялла тухма çул пулмарĕ. Ирсĕр тăшмана саншăн таварăтпăрах! – тенĕ юлташĕсем хурланса.

1949 çултанпа Шупашкарта пурăнать Роза Кирилловна. Ĕмĕрĕпех стройкăра вăй хунă.

– Эпĕ – вăрçă ачи. Çĕнтерӳ кунне каймасăр чăтаймарăм. Аттепе пиччене асра тытсах Атăл хĕрринелле çул тытрăм. Эх, вĕсен вил тăприйĕсем çинче чун каниччен хӳхлеймерĕм çак таранччен. Питĕ шел, – терĕ вăл куççульне ирĕке ярса.

## Эпир – вăрçă ачисем

Шупашкар районĕнчи Кӳкеçри лицейра вĕренекен Степан Романовăн ятарлă çар тумĕ пур. Унпа вăл тĕрлĕ уява çӳреме кăмăллать.

– Мăн асаттепе мăн кукаçи те вăрçăра пулса паттăрлăх кăтартнă. Асатте те 30 çул ытла йĕрке хуралçинче вăй хунă. Манăн та ӳссен çар çынни пулас килет, – тет вĕренӳ отличникĕ хăпартланса.

Аслашшĕ, Валерий Александрович, вун сакăр çултах салтак атти тăхăннă.

– Пирĕн йăхра пакунлă çын нумай. Пытармасăр каласан çар тумлĕ çынна пăхма кăмăллă, анчах та вĕсен ĕçĕ мĕн тери йывăр пулнине никам та тавçăраймасть. Ывăлăмсем те авă, Сашăпа Сергей, прокуратурăра вăй хураççĕ. Хăйсене шанса панă ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлаççĕ. Эпĕ хам – вăрçă ачи. Атте, Александр Степанович, фронтра тăшмана хирĕç кĕрешнĕ. Ах, йывăрччĕ çав вăхăтсем. Чăвашра ун чухне вăкăрсене кӳлме вĕрентнĕ. Вăкăр çапах та лаша мар. Темĕнле хăваласан та йăраланать çеç. Çур сехетре – çур сухрăм çеç. «Хăçан лашасемпе ĕçлеме пуçлатпăр-ши?» – тенĕ йăлтах фронт валли тăрăшакансем. «Вăрçă пĕтсен», – тенĕ пурте пĕр харăссăн ассăн сывласа. Уйăх çутипе тырă вырни те пулнă. «Ах, хăçан алла лăшт усса ларса канăпăр-ши? Çапах та чăтмалли нумаях юлмарĕ – тăшман тарать», – çапла калаçнă халăх. Фронт çаплах тумтир, апат-çимĕç ыйтнă. Лав хыççăн лав, лав, лав... Пурте фронт енне... Тав Турра, тăван тăрăха таврăнчĕ пирĕн атте. Çакă пирĕншĕн калама çук пысăк савăнăç пулчĕ. Кайран та вăл алă усса лармарĕ, колхоз бригадирĕнче тăрăшрĕ, – тет Валерий Александрович хăй çемйипе паллаштарнă май.

Мăшăрĕ, Роза Петровна та сăмах çăмхине сӳтмесĕр чăтаймарĕ.

– Çав вăрçă вăхăтĕнче тавралăх тăлăха юлнă: вăйпитти ар çын аллисĕр, вăйлă лашасемсĕр, пĕрлĕхлĕ юратусăр... Акă хăшĕ ашшĕ вилни çинчен хыпар илнĕ, тепри пиччĕшĕ çухални çинчен, виççĕмĕшĕн тусĕ аманнă... Пĕррехинче пĕр хĕрарăм упăшкин вилнĕ хутне илнĕ. Сирсе сирĕлми хуйхăпа ах тесе те сывлăшне кăларайман. Тăнран тухнă пек хытса кайнă та – пĕр вырăнта хускалми ларнă. Вăрçă чарăннă! Ку сăмах пурне те хăпартлантарнă. Çак кун çынсем кăна мар, çут çанталăк та, çĕр те, кайăксем те ирĕккĕн сывласа янă ахăртнех. Манăн аттене, Петр Степанович Данилова, вăрçă хирĕнчен тăван тăрăха килме çул пулчĕ. Ашшĕне, шăллĕ-пиччĕшне кĕтсе илейменнисем çине пăхма ай, мĕн тери йывăрччĕ. Кăшкăрса макăракан та, выртса йăваланакан та пулнă-çке. Хамăр ăрава асра тытса эпир те çемйипех çак уява килтĕмĕр, – терĕ вăл шухăша кайнă май.

***Элиза ВАЛАНС.***

Шупашкар.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕсем.**



# Тапанар пуласлăхĕ пур

**Тăван ял историне тĕпчемешкĕн Çĕрпӳ районĕнчи Вăрманкасра пурăнакан юратнă кукамай, Любовь Вениаминовна Трофимова патне çул тытрăм. "Вăл Тапанар мĕнле пуçланнине ăçтан пĕлет-ха?" – çак ыйту канăçсăрлантарчĕ мана. Ăна Тапанар ялĕнче çуралнă Алевтина Егоровна Емельянова каласа кăтартнă иккен.**



Тăван ялăм Тапанар (Çĕрпӳ районĕ) питĕ илемлĕ вырăнта, сăрт çинче вырнаçнă. Юнашарах Пушанар шывĕ юхса иртет. Ара, ял ячĕ те питĕ илемлĕ-çке. Тĕпчевçĕсем Тапанар çын ятĕнчен пулманнине ăнлантараççĕ. Мĕншĕн тесен чăвашсен ун пек авалхи ят пулман. Хальхи вăхăтра –анар, –нар формăпа вĕçленекен сăмахсем, ял ячĕсем Мари Республикинче чылай. Эппин, ун йышшисем кӳршĕ регионсене те сарăлнă пулмалла. Пĕрисем -анар, -нар сыпăксем энгер (çырма) мари сăмахĕнчен кĕскелсе пулнине, теприсем -нар сыпăк чăваш чĕлхине çывăх пулнине палăртаççĕ. Авалхи чăваш чĕлхинче çырма пĕлтерĕшлĕ энер(энкер) сăмах пулнă имĕш, вăл чăвашран мари чĕлхине куçнă иккен. Чăнах та, мари çыннисем энкер (çырма) сăмахпа халĕ те усă кураççĕ. Мари чĕлхипе хурăнташлă ытти чĕлхесенче энкер сăмах çук. Ял ячĕ икĕ сăмахран пуçланса кайни паллă ĕнтĕ: тапаÇнар. Интересленсех алла Ашмарин словарьне тытрăм. Акă мĕн ăнлантарнă унта: тапă – разлив, вода из пруда нижней мельницы, водопой скота. Унсăр пуçне тепĕр ăнлантару пур, автор палăртнă тăрăх тапă вăл – название ярмарки, которая бывает каждое воскресенье после Пасхи и Троицы в лесу на поляне.

Кукамай каланă тăрăх, ял ячĕ шывпа çыхăннă. Чăн та, пĕрремĕш палăрту пирĕн ялшăн çывăхрах. Ял пуçĕнче, Пушанарка юхан шыв хĕрринче, паянхи кунччен выльăхсене шăвармалли вырăн (тапăр) пур. Ваттисем каланă тăрăх, кунта ĕлĕк-авал çынсем выльăхсене ĕçтерме аннă.

Тапанар миçемĕш ĕмĕрте йĕркеленсе кайнине никам та татăклăн калаймасть. Çакна çирĕплетекен пĕр документ та çук. Тапанар ялĕ çинчен К. В. Элле архивĕнче асăннă, унта XIX ĕмĕрте ялпа тачă çыхăннă топонимика паллисене шыраса тупрăм: Пушанар шывĕ, Пушанар вăрманĕ, Пуп çулĕ, Етĕрне çулĕ, Пракух арманĕ, Якушка çырми, Тип тунката çырми, Хырлă вар, Тӳшек лупашки, Чашлама çăлĕ, Киремет сăрчĕ, Çарăк вырăнĕ, Тутар-монголсен çăви, Тĕне кĕмен чăвашсен çăви, Выльăх çăви, Купăста вырăнĕ, Çемен вырăнĕ, Курти ани, Шĕшкĕлĕх, Çĕмĕртлĕх, Кольцов çĕрĕ, Урапа каççи, Урапа çулĕ, Хветура арманĕ, Тапанар çĕрĕсем. Ялĕ пысăках мар пулнăран-ши е урăх сăлтава пула, Тапанар тăрăхĕ топонимсемпе пуян мар.

Ялăн кăнтăр енче тарăн çырма пур, çырма леш енче – Кăтак ялĕ. Çак çырмана халăхра Якушка çырми теççĕ. Ĕлĕк-авал çак çырмари çăлсене Якушка ятлă çын тасатса тăнă, çапла вара çăлĕсем те, çырми те халăх асĕнче Якушка ятпа упранса юлнă. 1930-мĕш çулсенче çак çырмари шыва пĕвеленĕ, çăлсем вара шыв айне пулса юлнă.

Тапанар ялĕнчен çур çухрăмра, хĕвел тухăç енче, Хырлă вар пур. Ĕлĕк ял çыннисем кунта утă çулма çӳренĕ, шăрăхсенче хыр йывăççи айне канма ларнă. Хальхи вăхăтра кунта хырсем ӳсмеççĕ, анчах та ячĕ çаплах сыхланса юлнă.

Ял çумĕнче тепĕр лапам пур. Тӳшек лупашки теççĕ ăна ватăсем. Мĕншĕн çапла-ши? Ку лупашка лаптăкĕ тӳшек пысăкăш пулнăран иккен.

Ялпа юнашар, Пушанар шывĕ хĕрринче, Пушанар вăрманĕ вырнаçнă. Ăна тарăн çырма икке пайланнăран ку вырăна Сăмсалăх теççĕ. Вăрманăн кăнтăр пайĕнче ĕлĕк шĕшкĕ йывăççи нумайран Шĕшкĕлĕх, çурçĕр енче çĕмĕрт йышлă пулнăран Çĕмĕртлĕх тенĕ çак вырăнсене.

Тапанарсен тепĕр паллă вырăн пур. Ку – Чашлама çăл куçĕ. Çак çăл Пушанар вăрманĕ çумĕнчи пĕр пĕчĕк çырмара тапса тăрать. Ял халăхĕ авалтанпах шыв ăсма çак çăл куç патне çӳренĕ. Халĕ çынсем çăл куç патĕнчен пăрăх хурса Чашлама шыв çулне ял çумне çывхартнă.

Ялтан пĕр-икĕ çухрăмра, аслă çул урлă, сăрт çамки курăнать. Ăна Киремет сăрчĕ тенĕ. Ĕлĕкех Тапанарсем çак сăртри вăрмана тĕрлĕ чӳк ирттерме çӳренĕ. Сăрт айлăмĕнчи çĕрсем Кольцов хуçан пулнă имĕш. Çак айлăмра Урпаш тата Пушанар шывĕсем пĕрлешеççĕ. Темиçе ĕмĕр каялла кунта Хветура ятлă хĕрарăмăн арман пулнине те çирĕплетеççĕ.

Икĕ шыв пĕрлешнĕ вырăнта – лапам. Çак çĕр çинче халăх çарăк ӳстернĕрен ăна Çарăк вырăнĕ тенĕ. Çарăк вырăнĕнчен инçех мар тутар-монголсен çăви пулнине калаççĕ. Кунта аслă çул тума пуçласан çын шăмми чылай тупнă-мĕн. Çак вырăнта çине-çине пулакан автоаварисене çул масар витĕр урлă выртнипе çыхăнтараççĕ. Мăн асаттесемпе асаннесен масарĕ Тапанар ялĕпе Кăтак ялĕ хушшинче пулнă. Унта тĕне кĕмен чăвашсене пытарнă. Хальхи вăхăтра кунта çăва палли çук.

Манăн шутпа, ялăн пуласлăхĕ пур. Паянхи кун Тапанар çĕнелсе те çĕнелсе пырать. Кил хуçалăхсем те çитмĕлтен иртрĕç. Çамрăксем те çемье çавăрса ялтах тĕпленеççĕ. Кунта пурăнмалли пур услови те çителĕклĕ. Ял халăхĕ çырма урлă вырнаçнă Кăтак ялне лавккана, клуба çӳрет. Шкул ачисене Вăрманкас шкулне автобус турттарать. Çĕрпӳ хули те инçех мар. Вăй питти ар çынсемпе хĕрарăмсем тăван хуçалăх арканнăран Çĕрпӳ хулине, Шупашкара ĕçлеме çӳреççĕ. Ялта уçă сывлăш пулнине кирек кам та пĕлет ĕнтĕ. Хула çыннисем те яла туртăнаççĕ. Çавна пула Тапанарта çуллахи çурт (дача) чылай. Ялта пурнăç кĕрлесе тăрать. Тапанарăн малашлăхĕ апла пулсан пурах.

***Анастасия ИВАНОВА,***
***8 "а" класс.***

Шупашкар,
49-мĕш шкул.

***Ертӳçи: Татьяна Владимировна ИВАНОВА,***
***чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ.***

## «Тăван ялăм çапла пуçланнă»

***Кăçал çĕр-шывра Культура çулталăкĕ иртет. Эпир те, «Тантăш» хаçат тусĕсем тата çамрăк тавра пĕлӳçĕсем, ăна паллă тăвас тетпĕр. Çав тĕллевпе «Чăваш Республикинчи учительсен ассоциацийĕ» çумĕнчи чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенсен секцийĕ (ертӳçи – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ Г.Л.Никифоров) редакципе пĕрле «Тăван ялăм çапла пуçланнă» конкурс йĕркелеме йышăнчĕ. Кунта эпир Чăваш Енри кашни ял мĕнле пуçланса кайни пирки сăмах хускатасшăн. Çак ĕçре эсир, вулакансем, пулăшни питĕ вырăнлă. Хăвăрăн тăван ял мĕнле йĕркеленни пирки мĕн пĕлнине çырса пĕлтерсен эпир сире чĕререн тав тунă пулăттăмăр***.

Хамăрăн кăк тымара, ял кун-çулне тĕплĕн пĕлмесĕр малашлăха утма хĕн. Ял историне пĕлмелле кăна мар, вăл манăçа ан тухтăр тесе хут çине çырса хумалла. Çавăнпа та ĕнтĕ шырав ĕçне пуçăнар пуль.

Ăна çырас ĕçре пулăшас шутпа 10 ыйту хатĕрлерĕмĕр. Вĕсене хуравлани кăна çителĕксĕр. Ял кун-çулне май килнĕ таран тулли тата çыхăнтарса çырма тăрăшăр.

Сирĕн ĕçĕрсенчи ял халапĕсем тĕрлĕрен пулма пултарĕç. Хăшĕ-пĕри истори чăнлăхĕсемпе килĕшсе те тăмĕ. Апла пулин те иртнĕ пурнăçа лайăх пĕлекен ватă çынсем мĕн каланине ним улăштармасăр çырса илĕр. Ял пуçламăшне каласа параканăн хушаматне, ятне, ашшĕ ятне, хăçан тата хăш ялта çуралнине çырма ан манăр.

**«Тăван ялăм çапла пуçланнă»** конкурс ĕçĕсене раштавăн 1-мĕшĕнче пĕтĕмлетĕпĕр. Пахалăхлă хайлавсен авторĕсене парнесемпе чыслăпăр.

«Тăван ялăм çапла пуçланнă» ĕçе çырма пулăшакан ыйтусем:

1. Ял ячĕ: чăвашла, вырăсла, чиркӳ пулнă пулсассăн чиркӳ ячĕпе панă ят. Ятне хăвăр ялтисем, кӳршĕсем епле калаççĕ?
2. Ят пĕлтерĕшĕ.
3. Ял пуçланса кайни çинчен калакан халап. Вĕсем темиçе те пулма пултараççĕ. Вĕсене те çырăр.
4. Пуçаракан çыннăн е йăхăн ячĕ.
5. Ялăн малтанхи вырăнĕ (Кивçурт вырăнĕ) ăçта тата мĕнлерех пулнă?
6. Ялăн хальхи вырăнĕ мĕнле?
7. Ял миçе ĕмĕр каялла пуçланнă?
8. Сирĕн ентешсем çĕр-шыв историйĕнче палăрман-и?
9. Ял çумĕнче истори палăкĕсем çук-и?
10. Ял çĕнелсе, улшăнса пырать-и?
11. Унăн пуласлăхĕ, малашлăхĕ пур-и?

**Хуравсене «Тантăш» хаçат редакцине çак адреспа ярса парăр:**
428019, Шупашкар, Иван Яковлев проспекчĕ, 13. 7 хут е редакцин электрон адресĕ çине – **tantas@list.ru**

# Ачасен пултарулăхěпе савăнатăп

*"Сăвă çырасси – хăйне евěрлě чун киленěçě. Шкул пěтерсен кашни тěрлě çулпа утě: хăшěсем аслă вěренÿ заведенийěсене кěрěç, теприсем производствăра тăрăшěç. Ун чухне те çырас ěçе пăрахмăпăр, – теççě пěр харăссăн Çěрпÿ районěнчи Опытнăй шкулěнчи "Çамрăк поэт" кружока çÿрекенсем. – Кружока чылай çул ертсе пыракан Людмила Ананьевна Павловăна тав сăмахě калас килет. Вăлах пирěн пултарулăха аталантарма пулăшать".*




Людмила Ананьевна вара ачисемпе савăнса пěтереймест. Кашнийěн таланчě тěрлě енлěн палăрать: пěри чăвашла тата вырăсла сăвă шăрçалать пулсан, тепри куçарупа ěçлет. Чăваш чěлхи вěрентекенě палăртнă тăрăх, кашни ачан тавра курăмě тěрлě. Шухăш-туйăмěсем сăвва куçние Людмила Ананьевна та, кружока çÿрекенсем те çирěплетеççě.

– Поэзи маншăн пěтěм пурнăç тесен те йăнăш пулмě. Чунри шухăшсене, кăмăлтуйăма сăвă йěркисем уçса пареççě, – шухăшне палăртать саккăрмěш класра вěренекен Алексей Рыбаков.

Сăвă çырас туртăм нумай пулмасть çуралнă унăн. Вăл Константин Симоновăн "Жди меня" хайлавне вуласа тухсан ăна тăван чěлхепе янраттарас шухăш тěвěленнě унăн. Унтанпа вăрçă тематики Алешăн пултарулăхěнче тěп вырăн йышăнать. Вăхăтран Симоновăн сăввине чăвашла куçарнă вăл. Людмила Ананьевна та рифмăсене йěркеленě, сěнÿ-канашпа пулăшнă.

– Юрату теми те илěртет мана, анчах çак сăвăсене хальлěхе никама та кăтартман. Кашнийěн хăйěн вăхăчě, – тет саккăрмěш класра вěренекенскер.

Кружок ертÿçи те Алешăна ырă енчен çеç мухтать. Арçын ача чылай кěнеке вулать иккен, тěрлě предмет олимпиадине, конкурссене хутшăнать. Алешăна район çыннисем те паллаççě, унăн пултарулăхěнчен тěлěнеççě.

"Çамрăк поэт" кружока чăваш, вырăс ачисем çÿреççě. Вěсен хушшинче çиччěмěшěнчи Инесса Геронтьевăпа Марина Павлова та пур. Хěр ачасем кун йышши кружок пулнишěн тем пек хěпěртеççě. "Сăвă çырма вěренес килчě", – савăнăçлăн хуравлаççě çамрăк поэтсем. Пěррехинче урок вăхăтěнче вěсене çамрăк сăвăçсен кружокě ěçленине пěлтернě. Хěр ачасем Людмила Ананьевна патне васканă. Унтанпа вăхăт чылай мар иртнě пулин те, Инессăпа Маринăн сăвă çырас ăсталăх аталансах пырать. Вěсем пушă вăхăтра та, урокра та, кружок валли уйăрнă сехетре те сăвă çыраççě. Уйрăмах тавралăх илемлěхне, тасалăхне мухтаса, хăш чухне çынсем çут çанталăка сиенлени çинчен шăрçалаççě.

Пиллěкмěш класра ăс пухакан Тоня Ивановăпа Кристина Данилова та кружока кăçал çеç çÿреме тытăннă. Хěр пěрчисем сăвă çырассинче пěрремěш утăм тăваççě кăна-ха. Вěсен сăввисем тин çеç çуралакан черчен çеçке евěр илемлě.

– Эпě çемье пирки, тěрлě уяв пирки шăрçалама кăмăллатăп, – сăмах хушрě Тоня.

Чăн та, кружока çÿрекенсемшěн уяв-праçник теми çывăххах. Шкулта мěнлерех мероприяти пулса иртет çакна сăвăра уçса памалла.

– Пěр-пěр уяв иртсен вěсене сăвă çырма ыйтатăп. Хам та ачасене тěрлě енлěн пулăшма тăрăшатăп. Рифмăсене тупатпăр, тÿрлететпěр, çырнисене тишкерсе тухатпăр. Кружока çÿрекенсене куллěнех чăваш писателěсен пултарулăхěпе паллаштарма тăрăшатăп. Уроксенче калав, сочинени шăрçалаççě ачасем. Пěррехинче вырăсла, кайран чăвашла пěр сас паллирен пуçланакан калав çыртăмăр. Çавăн пек ачасен çырас ăсталăх татах та ÿсет, – ăнлантарать Людмила Ананьевна Павлова.

Кружока çÿрекенсем хăйсем çырнă сăввисемпе район, республика шайěнче палăрма та ěлкěрнě. Паллах, ертÿçě куншăн хěпěртет çеç. "Тен, хăшě-пěри журналистика енěпе кайě. Куншăн савăнăп. Тăрăшнин усси те пулě", – тет вăл.

# «Юрă итлесен чунра лăпкăлăх хуçаланать»



Савăнăçлă, хурлăхлă самантра та чуна юрă-кěвěпе йăпатма тăрăшатпăр. Юрă-кěвě тěнчи, чăн та, хăйне евěрлě. Сăмахěсем шухăша яраççě: йăл кулма, савăнса пурăнма, йывăрлăхсене çěнтерсе пурнăç çине урăхла пăхма вěрентеççě.

"Юрăсăр кичем", – шухăшне пěлтерет Çěрпÿ районěнчи Опытнăй шкулěнче вěренекен Настя Салдакеева. Кирек мěнле ěçе те юрăпа пурнăçлать хěр ача. Ун пек чухне вăйхăват хушăннине, чунра лăпкăлăх хуçаланнине çирěплетет пике. Музыкăна ачаранпах кăмăллаканскер. Шкула çÿреме пуçласан та пăрахăçламан çак чун киленěçне – музыка шкулне çул такăрлатнă. Фортепиано класěнче ăсталăха туптанăскер гитара та калама ăста. Пике вырăс рок юрăçисен репертуарěнчи юрăсене итлеме кăмăлланăран вěсене çак музыка инструменчěпе каласа шăрантарать. Республикăри аслă вěренÿ заведенийěсем ирттерекен пултарулăх конкурсěсене те часчасах хутшăннă Настя. "Юрра-ташша кăмăлланăран артист пулма ěмěтленеттěм, халě вара юрист специальноçне алла илес шухăшлă. Пушă вăхăтра театр кружокне çÿреме пулать", – пěлтерет 11-мěш класра вěренекенскер. Çавăнпах патшалăх экзаменěсене тытма тăрăшса хатěрленет вăл. Историпе, обществознанипе факультативсенче çÿресе пěлÿ пухать, унсăр пуçне право предметне тарăннăн вěренет.

Çапах чылай вăхăта чун киленěçě валли уйăрать пике. Хăш чухне юлташěсемпе пухăнса гитарăпа каласа савăк юрă шăрантараççě вěсем. Хавасла кăмăлпа малашлăха тинкерсе паянхи кунпа пурăнаççě.

**Ирина КОШКИНА.**

Çěрпÿ районě,
Опытнăй шкулě.




# Хăнара – паллă çыравçă

Нумаях пулмасть пирěн шкулта Чăваш халăх писателě, тăван халăхăмăрăн хисеплě çынни Михаил Николаевич Юхма пулчě. Çыравçă ачасемпе тěл пулу ирттерчě. Вěренекенсем писателěн пурнăçěпе тата пултарулăхěпе кăсăкланнă май ыйту çине ыйту пачěç. Ака уйăхěнче паллă çыравçă 78 çул тултарчě. Паян та писатель мěн тунипе çырлахмасть, малалла хавхаланса ěçлет, вулакансене çěнě произведенисемпе савăнтарас туйăмпа пурăнать.

Тěл пулура ачасем çыравçăн чăвашла тата вырăсла пичетленсе тухнă кěнекисемпе паллашрěç, илсе вулас текенсем те пулчěç. Хăнапа сăн ÿкерěнни уйрăмах асра юлчě.

**Валентина ШОРКИНА.**

Шупашкар,
18-мěш шкул.

**САН ЎКЕРЧĚКРЕ:** тěл пулу саманчě.

ЮМАХ

# Ултав ырри патне илсе çитермест

Çўлте, пĕлĕтсем хушшинче, илемлĕ çĕр-шыв пур. Кунта асамçăсем пурăнаççĕ. Пĕррехинче асамçă хĕр пĕлĕтсем хушшинче вырнаçрĕ те мĕн пулса иртнине сăнаса ларчĕ. Инçех мар, уçланкăра, пĕчĕк пўрт. Хăйăр купи çинче икĕ ача выляса лараççĕ. Унччен те пулмарĕ амăшĕн сасси илтĕнчĕ:

– Марье, Йăван! Апат çиме килĕр. Малтан аллăрсене çума ан манăр. Апатлансан вара çывăрма вăхăт.

Ачасем васкасах теттисене пуçтарса пўрте чупса кĕчĕç. Асамçă хĕр çаплах пĕчĕкскерсене сăнаса ларчĕ. Тăрук Марьепе Йăван хыççăн пўрте темĕнле хура мĕлке кĕчĕ. Асамçă хĕр вăл кам пулнине курса юлаймарĕ.

Марьепе Йăван валли амăшĕ ятарласа тутлă кукăль пĕçерсе хунă. Сĕтел çинче хăмла çырли ларать. Хĕрарăм ачисене тин çеç суса кĕнĕ сĕт ярса пачĕ. Хĕр ачапа арçын ача хаваспах апат çиме тытăнчĕç, кайран вара амăшне тирĕк-чашăк çуса хума пулăшрĕç. Çав вăхăтра амăшĕ çывăрмалли пўлеме утрĕ.

– Интереслĕ юмах илтес килсен шăлăрсене тасатма ан манăр, ачамсем.

Марьепе Йăван пуçĕсене сулларĕç. Амăшĕ пăрăнсанах шăлсене тасатмăпăр тесе килĕшрĕç. Ара, вĕсем кунĕпех ывăннă-çке! Часрах ыйха путас килет вĕсен. Амăшне вара шăл тасатманни пирки каламарĕç.

Ачасене сăнаса ларакан асамçă хĕре Марьепе Йăван суйни килĕшмерĕ. Ултав ырри патне илсе çитермест-çке!

Пĕчĕкскерсем юмах итлесех çывăрса кайрĕç. Амăшĕ сĕтел çинче çурта çутса хăварчĕ те пўлĕмрен тухрĕ. Ачасем çывăракан пўлĕмре çутă пулнăран асамçă хĕр каллех вĕсене сăнаса ларчĕ. Унччен те пулмасть пўлĕме леш хура мĕлке кĕрсе тăчĕ. Асамçă хĕр вăл кам пулнине палларĕ. Усал асамçă Кариес! Вăл шăл тасатман ачасем патне васкаса килет вĕт. Кариес пĕчĕкскерсен шăлĕсене ăрăмлать те вĕсем хуралса каяççĕ, кайран вара ыратма пуçлаççĕ. Вара шăл тухтăрĕ патне каймалла. Çапах та, хăш-чухне тухтăр та чирлĕ шăлсене сыватаймасть. Кариес вара ытларах пĕчĕк ачасен шăлĕсене юратать, вĕсене ăрăмлама та çăмăлрах.

– Ачасене еплерех пулăшас-ши? – асамçă хĕр хуйха ўкрĕ.

Унччен те пулмасть усал Кариес Марьепе Йăван шăлĕсене ăрăмларĕ, кула-кула пўлĕмрен тухса кайрĕ. Каçхине вара пĕчĕкскерсем шăл ыратнипе вăранчĕç. Амăшĕ ирхине ачасене тухтăр патне илсе кайрĕ.

– Эсир аннўне суйса шăлăрсене тасатмарăр-ха пулĕ? – ыйтрĕ шăл тухтăрĕ.

Марьепе Йăван йĕрсе ячĕç.

– Ас тăвăр, нихăçан та никама та улталамалла мар! Ултав ырри патне илсе çитермест! Халь сирĕн шăлăрсене Кариес ăрăмланă. Ниммĕнпе те пулăшаймастăп. Шăлăрсене кăларма тивет, – терĕ тухтăр.

Ачасем тата вăйлăрах макăрма пуçларĕç. Çак вăхăтра пўлĕм çуталса кайрĕ, асамçă хĕр вĕçсе килчĕ.

– Ачасем, ан йĕрĕр! Эпĕ асамçă хĕр. Çĕрĕпе сире еплерех пулăшмаллине шухăшларăм. Хуралнă шăлсем вырăнне эпĕ сире çĕннисем парнелĕп. Вĕсем вăхăт иртсен тухĕç. Анчах та Кариес каллех шăлăрсене ăрăмласан эпĕ сире текех пулăшаймăп. Çавăнпа та, шăлсем ан хуралччăр тесен мĕн тумаллине пĕлетĕр эпĕ!

– Мĕн тумалла-ши? – Марьепе Йăван савăнса кайрĕç.

– Пирĕн хăвăртрах пĕлес килет!

– Усал Кариес шăлсене ан ăрăмлатăр тесен вĕсене кашни кунах тасатмалла. Шăлсем вара сывă пулĕç.

– Тавах сана, – Марьепе Йăван хĕпĕртенипе сиккеле пуçларĕç. – Эсĕ мĕн каланине итлĕпĕр, кашни кунах шăлсене тасатма пуçлăпăр. Усал Кариеса мĕнле çĕнтермеллине ытти ачасене те каласа парăпăр!



*Вырăсларан Ирина КОШКИНА куçарнă.*

# «Çĕре космосран курасчĕ...»



Демид ят грек чĕлхинчен килнĕ, «Зевс канашĕ» е «Турă шухăшĕ» тесе куçать. Питĕ сайра вăл, Александрсемпе Алексейсем пек кашни утăмра тĕл пулмасть. Йĕпреç районĕнчи Ирçе Çармăс шкулĕнче çакăн ятлă ачапа калаçсан вăл мĕн тери ăслă, анлă тавра курăмлă пулнинчен, кашни сăмаха чухласа пуплениччен тĕлĕнтĕм.

Улттăмĕш класа çўрекен Демид Моисеев вĕренўре «5» паллăпа çеç ĕлкĕрсе пырать. Пуринчен ытла математика предмечĕ килĕшет ăна. Кашни çулах «Чĕвĕлти чĕкеç», «Золотое руно», «Русский медвежонок» тата «Кенгуру» конкурссенче палăрать. Пĕлтĕр астрономипе авиаци темипе района аттестаци витĕр тухса значок та тивĕçнĕ. Православи культурипе вара район олимпиадинче ăна çитекен пулман. Унсăр пуçне вăл волейбол секцине, шахмат кружокне тата шкулта йĕркеленĕ «Патриот» клуба çўрет.

Тĕнчере пулса иртекен лару-тăрупа интересленекенскер çĕнĕ хыпар кăларăмĕсене сăнасах тăрать. Мĕн пĕчĕкрен тĕнче уçлăхĕпе кăсăкланнăран çак темăна хускатсанах чылайччен калаçма хатĕр. Космос тĕлĕнтермĕшĕсем çинчен нумайрах пĕлес тесе час-часах энциклопеди страницисене уçкалать вăл. «Кашни арçын ача пекех эпĕ те космонавт пулма ĕмĕтленетĕп», – тет çирĕп тĕллевлĕскер. – Манăн Çĕре тĕнче уçлăхĕнчен курас килет». Чăваш Енре çуралса ўснĕ космос паттăрĕпе Андриян Николаевпа вăл çав тери мăнаçланать. Кăмăлĕ енчен вара паллă ентешĕмĕр евĕртерех туйăнать: ун пекех ырă та сăпайлă, ăслă, ĕçрен хăраса тăмасть.

Мĕнле те пулин информаци тупсанах Демидпа юлташĕсем ăна пĕрле сўтсе яваççĕ, тўпери паллă мар вĕçекен япаласем çинчен нумай калаçаççĕ. Анлă тавра курăмлă арçын ача каланинчен эпĕ те нумай çĕнни пĕлтĕм: «тĕнче уçлăхĕн хăнисем» темиçе парсек (çутă çулталăкĕ) витĕр Çĕр çине тăтăшах килеççĕ иккен, вĕсен пуç мими пирĕннинчен чылай пысăк.

Тен, ят чăнах та çыннăн шăпине витĕм кўрет? Ку арçын ача нумай пĕлме ăнтălни, тарăн ăслă пулни те унпах çыхăннă-ши? «Çакна ĕненес килет», – терĕ Демид манăн шухăша пайласа.

Юлашкинчен вара çакна асăрхаттарам, эпир мĕне ĕненетпĕр, çавă пулать те. Демид пек ялан ыррине çеç ăса хывар.

*Лариса ПЕТРОВА.*

# Ашшĕпе амăшне хистесех кĕнеке вулаттарать

Йĕпреç районĕнчи Ирçе Çармăс шкулĕн вулавăшĕнче тăтăшах тĕрлĕ акци иртет. Çĕнĕ кĕнекесемпе паллашакан Диана Копеева кашнинчех хастарлăхпа палăрать. «Аçу-аннўне вулавăша илсе кил» акци пуçлансан та лăпкăн ларма пултарайман вăл. Килне тĕрлĕрен кăсăклă кĕнеке илсе ситнĕ те ашшĕ-амăшне: «Вулăр!» – тенĕ. Хĕрĕ хушнине вара итлемеллех.

Ирçесемпе хутăш пурăннăран ку библиотекăра икĕ халăх ачисем те хăйсене кирлине тупĕç. Мордва халăхне çутта кăларакан М.Е. Евсевьева халалланă уйрăм кĕтес те пур. Сăмах май, çак шкула ун ятне панă. Пĕр-пĕрне хисеплекен халăхсем тахçанах килĕштерсе пурăнаççĕ. Диана ирçелле те ăнланать. Мĕн чухлĕ ытларах чĕлхе пĕлетĕн, çавăн чухлĕ ăслăрах пулатăн-çке.

«Мана фантастика калавĕсем ытларах килĕшеççĕ. Çавăн пекех М.Ю. Лермонтов сăввисене вуласа чуна килентеретĕп», – тет вĕренўре малта пыракан маттур хĕр ача. Килти ĕçсене питĕ тĕплĕ пурнăçлать вăл. Тепĕр чухне математикăпа тата общество пĕлĕвĕпе тĕрлĕрен йывăрлăх та сиксе тухать. Ăнланманнине вара Диана ыт ахальлĕн хăварма хăнăхман. Кăткăссине ансатлатма тăрăшаканскер пĕр ыйтăва та татса памасăр хăвармасть – малашне вăл пĕрех тĕл пулĕ-çке, çавăнпа ăна халех уçăмлатмалла.

Чунĕ илем патне туртăннăран литература предметне Диана питĕ юратать. Пурнăçа пĕлсе çырнă хайлавсене вуланă май вăл шухăшласа кăларнă тĕнче авăрне путать тейĕн. Черчен чунлăскер йĕри-тавра илем асăрхать. Тепĕр чухне вара йывăç-курăк, чечексем тĕлĕнмелле илĕртўллĕн курăнаççĕ те хĕр ача вĕсене шурă хут çинче сăнлама васкать. Пейзаж ўкерсен унăн кăмăл-туйăмĕ те тўрех çĕкленет, çак ĕç чуна сиплетçке. Тăван тавралăха хитрелетме ĕмĕтленекенскер дизайнер пулма тĕллев те лартса хунă. Пуканисене тăтăшах çĕнĕрен те çĕнĕ кĕпе çĕлесе тăхăнтарать.

Халăхăмăра çутта кăларакан И.Я. Яковлев – Дианăшăн тĕслĕх вырăнĕнче. Пĕтĕм чăвашлăх çак Улăппа çыхăннине туйăнать. Тĕрлĕрен кăткăс лару-тăрава лексен яланах унăн ăслă калавĕсем аса килеççĕ.

Ашшĕ-амăшĕ хĕрне ыррине кăна каласа ўстерет, тăрăшуллă пулма, ыттисене пулăшма вĕрентет. Вĕсен ăшшипе юратăвне туйса Диана та пурнăçăн кашни самантне хаклать. Унăн куçĕнчи телей çути вара юлташĕсене çеç мар, тĕл пулакан кашни çынна хавхалантарать.

*Лариса ПЕТРОВА.*



Тантăш 7
19 №, 2014, çу, 15

# Ахаль салфеткăран – илемлĕ чечек

**Эпир сĕтел çинче салфетка курма хăнăхнă. Унран мĕн-мĕн тума пулнине вара пурте пĕлмеççĕ. Ăста алăллă çын çак çӳхе те кăпăшка хута самантрах чĕрĕ сăн кĕртĕ. Тепĕр тесен, ăна туянма та хаклă мар. Эппин, шухăш вĕçевне ирĕк парса пултарулăхăра аталантарма ан ӳркенĕр. Çине тăни тата чăтăмлăх кăна кирлĕ.**



## «Кĕлчечек»

Ку ĕçе пурнăçлама икĕ е виçĕ сийлĕ салфетка кирлĕ. Виçĕ сийлисене уйăрсан чечек илемлĕрех тата типтерлĕрех курăнĕ. Хĕрлĕ тата симĕс тĕслĕ пĕр сийлĕ салфетка илетпĕр: пĕринчен чечек папки, тепринчен тунипе çулçи пулĕç. Малтанах хĕрлĕ тĕслине сарса хумалла. Унăн пĕрре виççĕмĕш пайне асăрханса касса илĕр. Салфеткăна варринчен хуçлатăр. Шăпах çӳлти пайне ӳкерчĕкри пек аялалла авса антарăр. Çӳлти йăрăмне сулахай алăн шĕвĕр пӳрни тавра çавăрăр. Кĕлчечек папки хатĕр. Пĕр кĕтесĕ кăштах тухса тăрĕ. Ăна çӳлерех туртса кăларăр та айккинелле авăр. Чечек папкине кăпăшкалатăр, анчах ан лӳчĕркĕр.

Туни валли пĕр сийлĕ салфетка кирлĕ, е ун вырăнне виçĕ сийрен пĕринпе усă курма пулать. Салфеткăна чечек папкин чĕркенĕ вĕçĕ тавра ӳкерчĕкре кăтартнă пек çавăрăр. Туна варринче çулçă хăварма ан манăр.

Çак ĕçсене вĕçленĕ хыççăн эсир хăвăр алăпа ăсталанă илемлĕ чечекпе киленме пултаратăр. Кĕлчечек хатĕр. Ун пеккисене темиçе те тусан вара çывăх çынсене савăнтарасси пирки ан иккĕленĕр.



Ку меслетпе открытка хатĕрлеме те аван.

Çак техникăпах эсир сакура чечекне те ăсталама пултаратăр. Ăна валли тĕрлĕ тĕслĕ виçĕ сийлĕ салфетка кирлĕ. Тăватă пая пайламалла та унчченхи çаврашка вырăнне чечек йĕрлесе касса кăлармалла. Малалла вара ӳкерчĕкри пек ĕçлемелле.

## «Сар чечек»



Салфеткăн виçĕ сийне те уйăратпăр. Иккĕшне чечек валли илетпĕр те тăватта хутлататпăр. Икĕ сийне пĕр-пĕрин çине хĕресле хуратпăр та ӳкерчĕкре кăтартнă пек степлерпа çирĕплететпĕр.

Тăваткалскер çине çаврашка ӳкерсе касса кăларатпăр. Хĕррипе вĕттĕн-вĕттĕн ваклатпăр. Çӳлти сийне асăрханса çĕклетпĕр те пӳрнесемпе варринелле хĕстеретпĕр. Ытти сийĕсемпе те çаплах ĕçлетпĕр. Чечек папки хатĕр.

## «Гвоздика»



Пире виçĕ сийлĕ хĕрлĕ тĕслĕ салфетка кирлĕ. Хĕрринчен пĕр сантиметр сарлакăш татса илетпĕр (çапла майпа çеçкесем чĕрĕ пекех курăнĕç). Анчах асăрханăр, хуçлатнă енне татса ан пăрахăр. Салфеткăна ӳкерчĕкре кăтартнă пек сарса хуратпăр та «хут купăсла» хуçлататпăр, татса илнĕ хăюпа варринчен çавăрса бант евĕр ăсталатпăр.

Халĕ вара бантăн пĕр енчи кашни сийне пĕрерĕн-пĕрерĕн çĕклемелле. Тепĕр енне кĕскетсе степлерпа çирĕплетме юрать, вăл чечек папки пулĕ.

Манса ан кайăр, гвоздикăсем шурă та, хĕрхĕм те, çепĕç сарă та пулаççĕ. Çавăнпа тĕс пирки пĕрре те иккĕленсе ан тăрăр.

Енчен те çак ĕçĕн малтанхи утăмĕсенче хĕррине татса илмесен, мĕн пуррине хуçлатсан, кĕтесĕсене çурма çаврашкан кассан, пачах та урăх чечек пулса тăрĕ.

Халĕ чечексене çавракa япала (хăмпă е тата ытти хатĕр) çине çилĕмпе çыпăçтаратпăр. Çӳçе сирпĕтмелли çутă пĕрчĕклĕ лакпа сапсан вĕсем тата илĕртӳллĕрех курăнĕç. Ку «асамлă» чечек çыххи сирĕн пӳлĕме палăрмаллах илем кĕртĕ.



*Рубрикăна Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

# Харсăр Марат



**Марат Иванович Казей 1929 çулхи юпа уйăхĕн 29-мĕшĕнче Белоруссири Дзержинск районĕнчи Станьково ялĕнче çуралнă. Маратпа амăшĕ, Анна Александровна Казей, пурăннă яла фашистсем вирхĕнсе кĕнĕ. Пиллĕкмĕш класа кайма хатĕрленекен арçын ачан тек шкула каясси пулман: фашистсем пĕлӳ çуртĕнчен казарма туса хунă. Тăшман иртĕхнĕ.**

Çапла вара чи хăрушă вăрçă пуçламăшĕнче Маратпа Ариадна иккĕшех юлаççĕ: шăллĕ – вун иккĕре, аппăшĕ – вун улттăра. Нимĕçсем амăшне тытсан арçын ачан кĕсйинчен револьвер патронĕсем тухса ӳкеççĕ. Лешĕсем çакна асăрхамаççĕ-ши, тен, ачана шеллеççĕ… Маратăн вара шанчăклă вырăна пытарса хунă револьвер та пур. Часах амăшне çакса вĕлереççĕ.

Çывăх çыннине çухатсан 1942 çулхи чӳк уйăхĕнче Маратпа Ариадна партизан отрядне кĕреççĕ. Вăхăт иртсен Ариадна суранланнăран отрядран каять, Марата вара вăрçа пула таталнă вĕренĕве малалла тăсма сĕнеççĕ. Анчах вăл хирĕçлет, кунта хăй партизансемшĕн усăллăрах пуласса шанать. Çапла вăл вун виçĕ çулта салтак тивĕçне пурнăçлама тытăнать.

Çивĕч ăслă арçын ачана утлă разведка взводне йышăнаççĕ. Отрядăн упранса юлнă тетрадĕнче Марат Казей шăп та лăп çултаlăк çурă çапăçни çинчен каланă. Кайран вăл К.К. Рокоссовский ячĕллĕ партизан бригадин штабĕн разведчикĕ пулнă. Задание пĕччен те, ушкăнпа та çӳренĕ. Рейдсене хутшăннă. Эшелонсене сирпĕтнĕ. 1943 çулхи çапăçура юлташĕсене тапăнăва чĕнсе тăшман унки витĕр тухсан Марата «Паттăрлăхшăн» тата «Çарти тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» медальсемпе чысласçĕ.

Марат отрядри çĕвĕç çĕлесе панă шинельпе тата гимнастеркăпа çӳренĕ. Унăн пиçиххи çинче яланах икĕ граната пулнă: пĕри – сулахай енче, тепри – сылтăмра. «Мĕншĕн иккĕшне те пĕр енне çакса çӳреместĕн?» – ыйтнă унран Ариадна. «Пĕри – нимĕçсене, тепри – хама. Пăтраштарса ярас марччĕ», – тенĕ арçын ача калаçăва кулăша çавăрас тесе. Анчах хăйĕн сăнĕ пĕрре те шӳтленĕ пек курăнман.

Çав кун ир-ирех Маратпа бригада штабĕн разведка командирĕ Ларин юлан ут тытса Хоромицкие ялне çитрĕç. Ларинăн çыхăнуçăпа тĕл пулмалла. Пĕр сехет те пулин канса илсен те аванччĕ. Лашисене хресчен сарайĕ хыçне кăкараççĕ. Ларин çыхăнуçă патне каять. Марат вара пĕлĕшĕсем патне кĕрет те выртса канма ирĕк ыйтать, хăйне шăп сехетрен вăратма калать. Вăхăта сая ярас мар тесе вăл шинельне те, пушмакне те хывмасть. Çур сехетренех пăшалтан пенĕ сасăсем илтĕнеççĕ. Яла нимĕçсемпе полицаи хупăрласа илнĕ. Ларин пульăран тарса ĕлкĕреймест, ăна хирте персе пăрахаççĕ. Марат тĕмсем хыçне çитет, анчах шăпах çавăнта çапăçăва кĕме тивет.

Ку ĕç-пуç пĕтĕм ял-йыш умĕнче пулса иртет. Малтан автомат шатăртаттарать, унтан граната сирпĕнет. Нимĕçсемпе полицайсем ытлах пемеççĕ те, анчах вĕсенчен нумайăшĕ пĕр ӳксен тек çĕкленеймест. Арçын ачана чĕрĕлле тытасшăн вĕсем. Иккĕмĕш граната сирпĕнет. Тавралăх шăпланать. Вун тăватă çулти Марат Казей çапла вилет.

Марата, Ларина тата çав вăхăтра ялта пулнă тепĕр партизана чыслăн пытараççĕ. Роккосовский ячĕллĕ бригада валли хатĕрленĕ 1944 çулта кăларнă хушусенчен тăваттăшне Марата халалланă. Виççĕшĕ – вăрçă заданийĕсене аван пурнăçланăшăн. Тăваттăмĕшĕнче 1941 çулхи çу уйăхĕн вун пĕрмĕшĕнче Хоромицкие ялĕнче Марат фашистсемпе çапăçса паттăррăн пуç хуни çинчен каланă.

1945 çулхи çуркунне Марат аппăшĕ Беларуçе таврăнать. Çак хăрушă хыпара ăна Минскра амăшĕн аппăшĕ пĕлтерет. Çав каçах хĕр Станьковăна каять. Марата халалланă пĕрремĕш палăка вăл вилнĕ вырăнта, вăрман уçланкинче лартнă. Анчах та 1946 çулта унăн кĕлеткине Станьковăна куçарма шут тытаççĕ.

Вăрçă хыççăн Ариадна Ивановна Минскри 28-мĕш шкулта педагог пулса ĕçлет. Шăллĕн паттăр ĕçĕ çинчен шкул ачисем пĕлчĕр тесе нумай тăрăшать вăл. 28-мĕш шкулта Марат Казей ячĕллĕ музей та пур.

Паттăр ачан тăван ялĕнче вара, Минск облаçĕнчи Дзержинск районне кĕрекен Станьковăра, вăтам шкула ун ятне панă тата музей уçнă. Кашни çулах шкул ачисем Марат Казейĕн Асăну палăкĕ умĕнче линейка ирттереççĕ.

Çак харсăр ача манăçа ан тухтăр тесе «Пионерская правда» хаçат журналисчĕ Вячеслав Морозов нумай тăрăшнă. Вăл шкул ачисене çамрăк салтакăн паттăрла ĕçĕ çинчен каласа панă, Марат Казей пурнăçĕ çинчен «Арçын ача разведкăна кайнă» кĕнеке çырса кăларнă. Станислав Шушкевич çыравçă та ун çинчен «Паттăр Марат» ятлă кĕнеке хатĕрленĕ.

Минскра, Оперăпа балет театрĕ çывăхĕнчи скверта, Марат Казейĕн пăхăртан тунă палăкĕ мăнаçлăн курăнса ларать.

1965 çулта паттăр ачана (вилнĕ хыççăн тин ĕнтĕ) Совет Союзĕн Геройĕ ятне параççĕ.




## *Вулакан шухăшĕ*

***Виктория Александрова** (Канаш районĕ, Уçырма шкулĕ):*

– Вăрçă темине хускатнă кĕнекесем пур ачана та килĕшеççĕ пуль… Вырăсла çырнисенчен мана Любовь Космодемьянскаян «Зойăпа Шура çинчен калакан повеçĕ», Борис Полевойăн «Чăн-чăн çын çинчен çырнă повеçĕ», Александр Фадеевăн «Çамрăк гвардийĕ», Елена Ильинан «Тăваттăмĕш çӳллĕшĕ» тата ытти хайлав кăмăла каять. Чăвашла çырнисене те юрататăп. Вĕсенче халăх кун-çулĕ, йăли-йĕрки сисĕнет. Вырăслисенчен уйрăларах тăраççĕ. Тăван чĕлхепе çырнăран-ши чунăма çывăхрах пулнăн туйăнать. Вĕсене вуланă чухне эпĕ хама тĕп сăнар вырăнĕнче куратăп. Вăрçă çинчен çырнă хайлавсем мана ăс-хакăла ӳстереççĕ, пирĕн асаттесемпе мăн асаттесем камшăн тата мĕншĕн çапăçнине ăнланма пулăшаççĕ. Вуланă май хам та çав вăхăтри асапланăва тата савăнăçа чăтса ирттеретĕп: кулянатăп, йĕретĕп, фашиста курайместăп, тарăхатăп, лайăх самантсенче хĕпĕртетĕп, чунтанах савăнатăп. Тин кăна кĕнеке хуплашкине уçса пуçламăш йĕркесене йĕрлеме пуçланă пекчĕ, сиссе те юлаймарăм – эпĕ вĕçне те çитнĕ иккен.



Малтанхи çулсенче чăвашла сахал вулаттăм. Халĕ вара çав çитменлĕхе пĕтерес тĕллев лартрăм. Çитĕнӳ пур-ха. Пирĕн çыравçăсем мĕн тери лайăх, чуна тивмелле хайлавсем çыраççĕ. Тавтапуç вĕсене çакăншăн чĕререн!

## Савăнăçлăн «Ура!» кăшкăрасси ăçтан пуçланнă?



Мĕн авалтанах вырăс çарĕсем тăшмана тапăннă чухне «Ура!» кăшкăрса хăратнă. Паян çак сăмах кашни чĕлхерех пур. Вăл хăех çĕнтерме чĕнет тейĕн. «Ура!» тенине илтсенех тăшман шиклене ӳкнĕ. Анчах çак сăмах ăçтан пуçланса кайнăши? Унăн çăл куçне темиçе те тупма пулать. Хăшне-пĕрне пăхса тухар-ха.

Пĕрремĕш шухăш. «Ура!» сăмах вырăс чĕлхине тĕрĕк чĕлхинчен кĕнĕ. Эппин, вăл «чĕрĕ», «йăрă» пĕлтерĕшлĕ «юр» сăмахран пулса кайнă. Хальхи болгар чĕлхинчи «юра» сăмах та тĕрĕксенчен килнĕ, вăл «тапăнатăп» тени пулать.

Иккĕмĕш шухăш. «Ура!» – тĕрĕк чĕлхинченех. Анчах та ку хутĕнче вăл «хĕне» пĕлтерĕшлĕ «урман» сăмахран пулни çинчен калаççĕ. Азербайджансен «вур» тени те çакнах палăртать.

Виççĕмĕш шухăш. Болгар чĕлхи патне таврăнар. Унта «Ургэ» сăмах тĕл пулать. Вăл «çӳлелле» тесе куçать. «Ура!» тени малтан, тен, ту çине хăпарнине пĕлтернĕ.

Тăваттăмĕш шухăш. Çапăçу вăхăтĕнче çапла кăшкăрма вырăссене тутар-монголсем вĕрентнĕ пулинех. Тапăнса пынă чухне вĕсем «Уракша!» е «Урагша!» тесе кăшкăрнă. Ку та «малалла» тенинех пĕлтерет.

Пиллĕкмĕш шухăш. «Ура!» сăмах славян йăхĕсемпе çыхăннă. Тен, вăл çапнине пĕлтерекен «ураз» сăмахран пулса кайнă?

Улттăмĕш шухăш. Литва чĕлхинчи тапăнма чĕнекен «вирай» сăмахран пуçланнă.

Çапах та сăмах мĕнле пулса кайни тĕп вырăнта мар. Вăл мĕнле шухăша палăртни чылай пĕлтерĕшлĕрех. Çак виçĕ сас паллиллĕ сăмах çеç çапăçура вăй-хал кӳме пултарать тăк, эппин, унра темĕнле хăват пурах.

*Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

# Сăвăпа чĕрем юрлать

## Тăван ял
Илемлĕ-çке ман савнă ялăм!
Йăмраллă ун урамĕсем.
Йĕри-тавра – пуян тавралăх,
Ĕçчен те кăмăллă çынсем.

Ăçта кăна эпир пулсан та
Аса илетĕп хам яла.
Унти уйсем, хирсем, вăрман та
Илем кÿреççĕ Мăн Выла.

Капмар та икĕ хутлă шкулĕ
Пире кĕтет кашни кунах.
Телейлĕ те таса кун-çулĕ
Чĕнет пире малтан малах.

Ухсай пекех мухтатăп эпĕ
Юратнă çĕрĕм-шывăма.
Кунта хаваслăн эп ÿсетĕп
Телей те савăнăç курма.

***Инесса ШАШКИНА.***
Элĕк районĕ,
Мăн Вылă шкулĕ.

## Çут çанталăк чĕрĕлет
Çак илемлĕ çуркунне
Савăнтарать тĕнчене.
Юр та ирĕлсе пĕтет,
Çут çанталăк чĕрĕлет.

Вĕçсе килчĕç кайăксем,
Шăрататçĕ юрăсем.
Эпир, маттур ачасем,
Ăсталатпăр йăвасем.

***Илья ОРЛОВ.***
Элĕк районĕ,
Чăваш Сурăм шкулĕ.



© *Света СЕМЕНОВА (Элĕк районĕ, Чăваш Сурăм) ÿкерчĕкĕ.*

## Тĕнче вăрансан
Ăшă çуркунне çитсен
Килчĕç кайăксем вĕçсе.
Шăратаççĕ юррине,
Вăратаççĕ тĕнчене.

Хĕвел ăшшăн тинкерет,
Йывăç-курăк чĕрĕлет.
Кайăк йăва çавăрать,
Ырми-канми тăрăшать.

***Рена АНАНЬЕВА, 5 класс.***
Канаш районĕ,
Вăрăмпуç шкулĕ.



© *Дима ВАСИЛЬЕВ (Элĕк районĕ, Чăваш Сурăм) ÿкерчĕкĕ.*

## Нихăçан та манăçми
Çитрĕ, çитрĕ çуркунне,
Улăштарчĕ хăй тумне,
Савнăç çитрĕ чĕрене
Илтсен кайăк юррине.

Ула курак краклатни,
Нăрăсем вĕçсе иртни,
Нихăçан та манăçми,
Ешĕл çуркунне çитни.

***Снежана ЯКОВЛЕВА, 5 класс.***
Канаш районĕ,
Вăрăмпуç шкулĕ.

## Çырлара
Пĕрре Оля юлташпа
Кайрăмăр сĕм вăрмана.
Нумай кăмпа пухрăмăр,
Уçланкăна тухрăмăр.

Уçланкăра çырласем,
Тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексем.
Курăк кавир пек выртать,
Кайăк-кĕшĕк юр юрлать.

Ак хĕвел анса пырать,
Киле каймалла пулать.
Тепре килĕпĕр кунта
Çуллахи каникулта!

***Аня НИКОЛАЕВА.***
Куславкка районĕ,
Кунер шкулĕ.

## Анне
Ун сасси – чĕкеç юрри,
Кулли – сар хĕвел шевли.
Çĕр çинче вăл чи ырри,
Тĕнчере чи илемли.
Пепкисемшĕн тăрăшать,
Чун-чĕререн юратать.
Эх, анне, манми анне,
Тайма пуç сана, анне!

***Ольга АЛЕКСАНДРОВА, 5 класс.***
Канаш районĕ,
Вăрăмпуç шкулĕ.

## Тĕлĕнтермĕш çуркунне
Ĕнер пулчĕ çил-тăман,
Паян пылчăк мăй таран.
Йăлăхтарчĕ вăл мана,
Тухса кайăп хулана
Богдан патне хăнана.
Вăл пурнать Шупашкарта,
Çук-çке лачака унта,
Çÿрĕп эпĕ тап-таса
Ăшшăн çеç кулкаласа!

***Никита КУДРЯВЦЕВ, 5 класс.***
Канаш районĕ,
Вăрăмпуç шкулĕ.



© *Илья ОРЛОВ (Элĕк районĕ, Чăваш Сурăм) ÿкерчĕкĕ.*

## Салтак арăмне
Янкăр ир вĕçсе çитрĕ хыпар –
Фашистсен вут-кăварлă «саламĕ».
Ăш-чике хыпса илчĕ пушар:
Мăшăру сан вăрçа кĕç ăсанĕ.

Унтанпа эс куçна та хупман,
Пĕр хыпар хуть чунна ăшăтинччĕ...
Ан йĕрсем, вăл хăйне упрайман.
Паттăрсен ретĕнче – чыслă ячĕ!

Ĕнтĕ çук çав сăлтав савăнма –
Çухату чĕрÿне хыт амантнă.
Вăхăт мар ачуна йăпатма.
Шăл çыртса малалла тапаланнă.

Сут куççуль сăрхăнать каççерен.
Ирхине колхоза тухса кайнă.
Нимĕçсен эшкерне чĕререн
Ылханса сан чĕрÿ кăмрăкланнă.

Вăрçă шавĕ таçта аякра...
Сурансем те çаплах пирчемерĕç.
Савнă мăшăр пулман çав çумра –
Çÿçÿсем çамрăклах кăвакарчĕç...

Паттăр салтак арăмĕ, сана
Чыс та мухтав чаплă çĕнтерÿшĕн,
Йывăр чух эс усмарăн пуçна
Мăшăрун ыр ятне çĕклессишĕн!

***Настя КУРТМИНА, 9 класс.***
Патăрьел районĕ,
Пăлапуç Пашьел шкулĕ.

## Çĕнтерĕве эсĕ шан!
Вăрçа каять çап-çамрăк яш –
Тăшман-мĕн тапăннă ирех.
Пулманччĕ-ха нихçан ачаш,
Çĕр-шыв ятне вал ямастех.

Таса тÿпе пек янкăр куç,
Юман пек çирĕп кĕлетки.
Кăтра та сарă хулăн çÿç,
Куçа илĕртекен кулли...

Ăсатрĕ салтака çемйи,
Ял-йыш пуçтарăнчĕ тата.
Ыратрĕ пит анне чĕри.
Хĕр тусĕ пăхрĕ вăтанса:

«Çыру çырма ан ман, савни.
Эс пĕл, кĕтсе илетĕпех.
Вăй парĕ, тен, сана шанни.
Халь йывăр, тусăм, кашнинех...»

Куна ĕçре вăл ирттерет...
Ватти, вĕтти асап курать.
Хĕрарăма та тĕрĕслет
Çак вăрçă – тÿрленми суран.

Каçхи тÿпе халь илĕртмест
Тухса тулсан та çăлтăрсем.
Аса илмесĕр кун иртмест –
Савнисĕр йывăр та кичем.

Хĕр тунсăхне сирме паян
Тыттарчĕ почтальон çыру.
«Ытла хаяр тискер тăшман.
Вăя шеллемĕп. Тавăру

Вутне эпир те чĕртнĕ. Халь
Пĕрре те шăпланмасть пăшал...
Юн тăкăнни пулмасть ахаль –
Çĕнтерĕве эс хытă шан!»

Шанни вара кайман сая.
Салтак та таврăнчĕ яла
Тем тĕрлĕ орден-медальпе.
Часах тĕл пулчĕ савнипе...

***Люба МЕШКОВА, 9 класс.***
Патăрьел районĕ,
Пăлапуç Пашьел шкулĕ.

## Ялан пултăр çапла!
Хаваслă çур кунĕ те çитрĕ,
Кармашрĕ хĕвел çÿлелле.
Мĕн чухлĕ чĕр чун ăна кĕтрĕ,
Ăсатрĕ «килне» сив хĕле.

Юрсем ирĕлсе те ав пĕтрĕç,
Часах симĕсленчĕ урам,
Тĕмсем лăпкăн çеç алă çупрĕç,
Пуç тайрĕ йăмра аякран.

Кашни чĕрĕ чун савăнать-çке
Çур кунĕ çитнишĕн чунтан.
Кам çывăрнă, çав вăранать-çке
Вăрах хĕллехи ыйхăран.

Çапла чĕрĕлет çут çанталăк,
Кунран кун шăвать малалла.
Çурхи кунсенче кăмăл савăк,
Ялан пултăр пирĕн çапла.

## Пахчари хитре кайăк
Ирхине ирех паян
Пирĕн пахчара
Хитре кайăк кăмăлтан
Шăратать юрра.

Чăтаймасăр эп пыратăп
Чÿрече умне,
Шăппăн итлесе ларатăп
Вăл юрланине.

Çепĕç кĕвĕ кăларать,
Пăркалать пуçне.
Çунатне сарса ярать
Хăй савăннипе.

***Алина ИВАНОВА.***
Вăрмар районĕ,
Тикаш шкулĕ.



© *Валерий ПАВЛОВ (Элĕк районĕ, Чăваш Сурăм) ÿкерчĕкĕ.*

## Çын тирпейсĕр пулнăран...
Шкул ачисем похода
Кайрĕç ешĕл вăрмана.
Апатланчĕç те выляреç,
Виç сехетрен киле кайрĕç.
Вĕсем хыççăн вăрманта
Çÿп-çап юлчĕ. Ак тата
Тĕрлĕ кантăк, кĕленче
Хĕртĕнет хĕвел çинче.
Кĕленче ванса каять,
Хаяр пушар пуçланать.
Йывăç хыççăн теприне
Çулăм илет тыткăнне.
Сĕм вăрмана çăлаймаççĕ,
Çулăма тĕп тăваймаççĕ.
Мĕншĕн-ха çак ачасем,
Похода килнĕскерсем,
Хăйсем хыççăн çÿп-çапа
Хăвараççĕ вăрманта?
Çын тирпейсĕр пулнăран
Пуçланать инкек ялан!

***Анастасия ЛЕОНТЬЕВА.***
Вăрмар районĕ,
Мăнçырма шкулĕ.

## Тавралăх илемĕ
Акă çитрĕ çуркунне,
Савăнтарать çынсене.
Урамра хĕвел пăхать,
Йăл-йăл кулса кăтартать.
Йăмрасемпе хурăнсем
Тата ытти йывăçсем
Ешĕл папка кăлараççĕ,
Тавралăха капăрлатаççĕ.

***Регина АРХИПОВА.***
Комсомольски районĕ,
Шурут шкулĕ.

## Çу çитнишĕн хĕпĕртетпĕр
Çуркунне хĕвел пăхать,
Тĕнчене вăл çутатать.
Йывăç çулçă кăларать,
Тутлă шăршă сарăлать.

Ача-пăча савăнса
Елчĕк енне чупкалать,
Тĕрлĕ-тĕрлĕ вăййăпа
Выляса вăл йăпанать.

Симĕс курăк ешерет,
Путек-сурăх сиккелет.
Чăх та чĕп кăтиклетет,
Çу çитнишĕн хĕпĕртет.

## Чунсăрлăх
Тÿпере салхуллăн
Кайăк хур вĕçет.
Иртенпех, мăнтарăн,
Мăшăрне чĕнет...

Тарăн кÿлĕ çийĕн
Çуйханса иртет.
Хăйĕн савнă тусĕн
Сассине кĕтет.

Çук, чĕнмест юлташĕ,
Вăл илтмест тусне.
Йывăр ун суранĕ,
Хăй выртать ÿпне.

Ăнланмасть-çке тусĕ,
Хăй патне чĕнет.
Мĕншĕн ун тăванĕ
Выртнине пĕлмест.

Тĕттĕм каç та пулчĕ,
Акă сĕм çĕрле.
Пур пĕрех вăл юлчĕ
Тусĕпе пĕрле.

Чунсăр-çке сунарçă,
Шеллеме пĕлмен.
Ултă чĕп халь выçă –
Амăшĕ килмен.

***Катя ЛАЗАРЕВА.***
Елчĕк районĕ,
Патреккел шкулĕ.

## Хурăн
Лартрăм эпĕ хурăн
Ăшă çуркунне.
Кил картипе çумăн
Çут хĕвел питне.

Кашни кун шăвартăм
Эп ăна шывпа.
Йĕри-тавра картăм
Çĕмĕрт хулăпа.

Çут хĕвел шевли
Çупăрлать ăна.
Ăшă çил ачи
Ачашлать кăна.

Чÿхенет çулçи
Çилĕ вĕрнипе.
Яштака хулли
Сĕртĕнет пите.

Ешерет ман хурăн
Вăхăт иртнĕçем.
Савăнать-çке чунăм
Йывăç ÿснĕçем.

## Манăн ĕмĕт
Кашни ача ĕмĕтленет
Çÿл тÿпене вĕçме.
Пултартăн эс çак ĕмĕте
Хăв пурнăçна кĕртме.

Вĕçсе хăпартăн тÿпене,
Çут çăлтăрсем патне.
Çĕклерĕн эс хăвпа пĕрле
Чăвашăн ыр ятне.

Сана пула чăвашсене
Тĕнче пĕлет паян.
Эс кĕтĕн космонавт шутне,
Хисеплĕ Андриян.

Сан ятупа ял-хулара
Пур халĕ урамсем.
Шупашкарта та, Шуршăлта
Лараççĕ палăксем.

Эп халĕ шкул ачи анчах,
Умра, ав, çул нумай.
Сан евĕр космонавт пулмах
Ĕмĕтленеп пĕрмай.

***Катя МАЙОРОВА.***
Элĕк районĕ,
Юнтапа шкулĕ.



© *Дима ИГНАТЬЕВ (Элĕк районĕ, Чăваш Сурăм) ÿкерчĕкĕ.*

# Телей çумăрĕ

Натали инке вăрахчен çывăрса каяймарĕ. Хальччен лайăххах ыйха путаканччĕ-ха. Темскерле шухăш канăçсăрлантарчĕ ăна. Çывăрас тесе тем чул тăрмашса выртрĕ пулин те ыйхă килмерĕ. Хушăран енчен енне çаврăнкаласа илчĕ, çапах çывăрса каяймарĕ. Аптранипе тăрса ларчĕ. Кĕçех тул çутăлать-ши? Чӳречерен пăхрĕ. Урамра тĕттĕм. Автан авăтни те илтĕнмест. Кăмака хыçĕнче шăрчăксем чĕриклетеççĕ. "Пĕччен кил-çурта тытса пыма йывăр пулать те... Таньăна вĕренме ямаллах. Унăн аслă пĕлӳ илсе çын пулмалла. Ялта юлсан вĕренеймĕ те, нимĕнле професси те алла илеймĕ. Эй, Турă, мĕн шухăшласа ларатăп-ха, хĕрĕме вĕренме ярас. Укçа-тенкĕрен хĕсĕкрех пулин те такăр çул çине тăратмаллах". Упăшки, Саша пичче, каланă сăмахсем те аса килчĕç. "Натали, Таньăран çын ту. Пĕлетĕп, сана çăмăл мар пулать. Сан çинче пĕтĕм шанчăк".

Саша пичче çĕре кĕни çулталăк çитет ĕнтĕ. Чĕрепе аптраса пурнăçран уйрăлчĕ çав вăй питти арçын. Алли ылтăнччĕ унăн. Ял халăхĕ мунча, пӳрт-çурт, хуралтă тавраш тума чĕнетчĕ – вăл нихăçан та ĕçрен пăрăнса юлман, çынсене вăй çитнĕ таран пулăшнă. Натали инке шыв ĕçес килнипе алкумне тухрĕ. Тĕттĕм пулин те куркапа витрене шыраса тупрĕ вăл. Умлăн-хыçлăн икĕ курка сивĕ шыв ăсса ĕçрĕ. Сĕт витри илсе картишне ĕне сума тухрĕ.

Тул çутăлма пуçланă иккен. Çине-çине кӳршĕсен автанĕ авăтрĕ. Çанталăк ăшă. Тислĕк купи енчен шăрчăк чĕриклетни илтĕнет. Çак сасă унăн чунĕнче темскер канăçсăрлантарнине кăтартать тейĕн. Ĕне патне пычĕ те çиллине ăшă шывпа çурĕ, шурă татăкпа шăлса типĕтрĕ те сума ларчĕ. Чăр-чăр юхать витрене сĕт. Кĕçех витре кăпăклă сĕтпе тулчĕ.

– Эх, Ромашка, сана сутас та килмест. Сĕтне те нумай антаратăн, – ăшшăн калаçрĕ ĕнепе вăтăр çултан иртнĕ хĕрарăм.

Натали инке выльăх-чĕрлĕхе юратать, кашнинпе пĕр чĕлхе тупма пĕлет. Мăрлушка кушак та унăн урине сĕртĕнсе çӳрекелет. Ăшă сĕт кĕтет пулмалла. Вăл кушака сĕт ярса пачĕ. Ун хыççăн ĕнепе сурăхсене картишĕнчен урама хăваламa пуçларĕ.

Анатра та, Турикасра та выльăх-чĕрлĕх макăрни уççăнрах илтĕнме пуçларĕ. Çак вăхăтра пăлтăртан картише Таня тухрĕ.

– Аннеçĕм, пĕртте канма пĕлместĕн эсĕ. Выртса кан-ха. Кĕтĕве хамах хăвалăп, – терĕ те шуратман пилеш патаккине алла илсе урама тухрĕ. Вĕсен ĕни аякка кайман-ха. Кӳршĕ Римма аппа та выльăхсене урама кăларчĕ.

– Ырă кун пултăр, кинемей, – сывлăх сунчĕ Таня.

– Сана та ырă кун. Çывăрма та пĕлместĕн, хĕрĕм. Манăн мăнук халĕ те хуп турттарать. Ачасене мĕн пĕчĕкрен ĕçе вĕрентмелле çав, – сăмах хушрĕ Римма аппа.

– Аннене çăмăлтарах пултăр тетĕп. Ури те час-часах ыратать унăн, – çепĕççĕн калаçрĕ Таня.

Римма аппа хĕре тинкерсе пăхрĕ. Унăн илемĕпе киленчĕ. Чăнах та, чипер вăл. Таня янкăр тӳпе куçлă, таса шурă ӳтлĕ, сивĕчĕ пилĕк таран. Ир тăракан кайăк тулă пĕрчи тупнă тенине аса илчĕ ватă çын. Хăйĕн мăнукĕ халĕ те çывăрнăшăн лайăх марланчĕ вăл. Çапах та шухăшне хĕре пĕлтермерĕ. Вĕсем шăкăл-шăкăл калаçса выльăхсем пухăнакан вырăна ĕнисемпе сурăхĕсене хăваласа кайрĕç. Кĕтӳçсем ĕнесене ял тулашне хăваласа тухсан Таня киле таврăнчĕ. Натали инке Таня киличчен ĕнер пĕçернĕ яшкана ăшăтса хучĕ, чей вĕретрĕ. Амăшĕпе хĕрĕ ирхи апат çиме сĕтел хушшине вырнаçрĕç.

Калаçура амăшĕ ĕнер килнĕ çыру пирки асăнчĕ. Çыру камран пулнине ыйтрĕ. Хĕрĕ, амăшĕнчен нихăçан та нимĕн те пытарманскер, ун пирки каласа пачĕ. Шупашкарти пĕр колледжран çитнĕ иккен вăл. Таньăна физикăпа математика класне вĕренме килме йыхравлаççĕ. Амăшĕ çырăва курнă иккен. Конверт çине çырнă сăмахсем ăна пăлхантарса ячĕç. Хĕрарăм хăй шухăшĕсене хĕрне пĕлтерчĕ.

– Вĕренме чĕнеççĕ пулсан каймаллах. Каймасан ĕмĕр тăршшĕпех ӳкĕнĕн. Мана та ырăпа асăнăн. Çирĕп пĕлӳ пухса аслă вĕренӳ заведенине вĕренме кĕмеллех. Паллах, хăвăн нумай тăрăшмалла. Тăван киле килсе тăрăн, эпĕ мĕнле те пулин пурăнкалатăп, – çапла ăс пачĕ хĕрне амăшĕ.

Таня хĕпĕртесе ӳкрĕ. Вăл апла каласса кĕтнĕччĕ.

– Ой, анне, мĕн тери пысăк телей! Шанăçна тӳрре кăларма тăрăшăп, – тесе çепĕççĕн амăшне ыталаса илчĕ.

Кĕçех Натали инке кӳрше тухса кайрĕ. Вăхăтлăха пĕччен юлнăшăн хĕпĕртерĕ тăхăр класс пĕтернĕ Таня. Тĕрлĕ шухăш капланса килчĕ.



– Кĕçех уйрăлу вăхăчĕ çитет-çке. Юлташсенчен, тăвансенчен пĕртте уйрăлас килмест. Темĕнле туйăм туртса тăрать хăй патне. Тăхăр çул пĕр сукмакпа утса çӳренĕ шкул та асăмрах юлĕ. Çапах та, хулана вĕренме каймалла, – тĕв турĕ Таня.

Колледжра лайăх вĕренме, ыттисемпе тан пулма вăл каникулта ăс-тăнне ӳстерчĕ. Пушă вăхăт тупăнсанах вулавăша çӳрерĕ. Вĕреннĕ темăсене аса илчĕ, чылай кĕнеке вуларĕ.

Çурла уйăхĕн юлашки кунĕсем те вĕçленсе пыраççĕ. Амăшĕпе хĕрĕ ир-ирех общежитире пӳлĕм йышăнас тĕллевпе Шупашкара çул тытрĕç. Пĕтĕмпех ăнса пырать паян. Чарăнăва çитнĕччĕ кăна – автобус тусан вĕçтерсе килнине асăрхарĕç. "Тимĕр ут" колледж умĕнчех антарса хăварчĕ. Унта та нумай кĕттермерĕç – Таньăна икĕ çын пурăнмалли пӳлĕме вырнаçтарчĕ. Пĕрле пурăнма лекнĕ Света пĕр класран пулнине пĕлсен питĕ савăнчĕ хĕр ача.

Вĕренӳ çулĕ йĕркеллĕ пуçланчĕ. Кĕçех хĕрсем пĕр-пĕринпе пĕр чĕлхе тупрĕç. Анчах та Таня колледж пурнăçне часах хăнăхаймарĕ. Тăван кил асран тухмарĕ пулмалла...

Пĕррехинче вун пиллĕкри хĕр Светăна кĕтмесĕрех тӳрех пӳлĕме васкарĕ. Тусан сăтăрнă вăхăтра асăрхамасăр тĕкĕре ӳкерчĕ, лешĕ вара чăл-пар саланса кайрĕ. "Тĕкĕр ванни ырра мар", – амăшĕн сăмахĕсене аса илчĕ Таня. Юлташĕ куриччен ванчăксене шăлса пуçтарчĕ. Кун çинчен никама та пĕр сăмах та каламарĕ вăл. Васкаса лавккана чупса тухса кайрĕ хĕр, каялла таврăнсан пӳлĕмре тирпейсĕрлĕх хуçаланнине курчĕ. Света урайне хут татăкĕсем пăрахнă, пушмакĕсем те унта-кунта выртаççĕ. Çав каç юлташĕпе хирĕçрĕ Таня. Колледж директорĕнчен ирĕк ыйтса урăх пӳлĕме куçрĕ.

Пĕррехинче пысăк тăхтавра коридорпа утнă чухне хĕр хăйне хура çӳçлĕ йĕкĕт шăтарасла пăхнине асăрхарĕ. Ун çине пăхса илчĕ те пăрăнса утрĕ Таня. Каччă хĕре хăваласа çитсе унпа паллашрĕ.

Кĕçех каникул вăхăчĕ çитрĕ. Илемлĕ пĕр кун Андрей мотоциклпа Таньăсен ялне кĕрлеттерсе çитрĕ. Пĕр-пĕринпе тĕл пулма вĕсем кĕсье телефонĕпе калаçса таталнăччĕ. Кĕтнĕ çĕре Андрей вăхăтра çитрĕ. Мотоцикла чарса пӳрт çумне лартрĕ. Хĕрпе каччă урам тăрăх алла-аллăн тытăнса утрĕç. Инçех мар темскер шăтăртатни илтĕнсе кайрĕ. Вăрман леш енче аслатиллĕ çумăр çăвать иккен. Кĕçех ял еннелле хура пĕлĕт капланса килчĕ. Андрейпа Таня ăшă çумăр айне лекрĕç. Каччă курткине хыврĕ те хĕр çине уртса ячĕ.

Çуллахи çумăр хăвăрт иртсе кайрĕ. Çут çанталăк çуталчĕ. Сывлăшра чĕр кĕмĕл пек тумламсем йăлтăртатрĕç. Аякра аслати кĕмсĕртетрĕ.

– Акă çумăр та чарăнчĕ, – хавассăн каларĕ Таня.

Андрей та хăйне хаваслăн тытрĕ.

– Çумăр çăвать, çумăр çăвать ман çине... – юрласа ячĕ Таня.

Сасартăк Андрей енне çаврăнчĕ те:

– Ку çумăр – телей çумăрĕ, – терĕ.

Андрей хĕре çепĕççĕн ыталарĕ.

***Валентина ВАСИЛЬЕВА.***

Шупашкар.

**ЧУНРИ**

# Лилисем

– Кун пек пулма пултаратьим-ха?

– Ĕненсем, темĕн те пулма пултарать...

– Ниепле те ăнланма пултараймастăп.

– Настя, мĕнле йывăр пулсан та, тĕрĕссине йышăнсам. Килĕштермест вăл сана, килĕштерсен те каламасть, мĕншĕн тесен вăл вăтанчăк.

– Çулталăк çитрĕ-çке. Çулталăк килĕштеретĕп ăна... Уншăн тем тума та хатĕр. Ăна курмасан хĕвел те пăхмасть. Унăн сассисĕр çанталăк та сивĕ. Эпĕ ăна килĕштернине темиçе хут та каланă. Кашни тĕл пулмассерен татах та çакăн пирки систерĕп. Куç илми ун çине пăхатăп. Вăл вара... Вылять манпа.

– Мĕншĕн апла калатăн?

– Кун пек каламасăр! Мана утса пынă çĕртех алăран тытма пултарать вăл. Ыттисен умĕнчех мана куç илми пăхать. Юлашки вăхăтра çеç сиввĕн пăха пуçларĕ.

– Çитет! Ан шухăшла ун пирки. Унăн хĕрĕ пур, сана килĕштермест вăл!



– Мĕншĕн çапла шантарса калатăн-ха эсĕ, Рая?

– Настя, каçар мана...

– Мĕн-ха, мĕн?

– Эсĕ килĕштернине курсах эпĕ Петьăна юратнине пĕлтертĕм.

– Хăçан?

– Икĕ уйăх каялла. Настя, урăх каламастăп.

– Каласам, Рая.

– Эпĕ ăна урамра тĕл пултăм. Ялтан килеттĕм ун чух. Мана йывăр сумкăсене йăтма пулăшрĕ вăл. Сан çинчен ыйтсан манăн кĕвĕçӳ туйăмĕ çуралчĕ. Петя яланах сан пирки ыйтать, Настя. Эсĕ те ун пиркиех калаçатăн. Эсĕ ăна килĕштерменнине суйрăм...

– Чим-ха. Мĕнле-ха капла?

– Вăл халь те сан пирки шухăшлать. Калас теменччĕ кун пирки. Анчах калатăп. Каçарсам мана. Эпĕ сана тахçантанпах суйса пурăнатăп. Сан пек ырă кăмăллă çынна суйнăранах, Петя пек лайăх каччăна улталанăранах сыватмăша лекрĕм пулмалла. Тинех ăнлантăм эпĕ çакна. Петя салам каласан та пытартăм санран. Мана килĕштермест вăл. Каçар мана, Настя...

– Рая, каçаратăп сана. Юрату, кĕвĕçӳ çеç суккăрлатнă сана... Чи кирли – санăн сывлăху. Сывалмалла, тусăм!

Палатăна Петя кĕчĕ. Аллинче – лилисем. Вăл чечек çыххине аварие лекнĕ Райăна тыттарчĕ. Хĕр вара лилисене шăршласа илчĕ те вăйсăр аллисемпе чечек çыххине Настя еннелле тăсрĕ:

– Каçарăр...

***Тина ФЕДОРОВА.***

Левтина Марье

# Тăлăх Марук

(Вун икĕ курăнуллă инсценировка)



**(Малалли. Пуçламăшĕ иртнĕ çулхи 39, 41, 45, 51-мĕш, кăçалхи 1, 6, 10, 13-мĕш номерсенче)**

**9-мĕш курăну**

**Хутшăнаççĕ:** Анюкпа Васук

*Çу уйăхĕ. Тавралăх кунсерен татах та симĕсленсе, илемленсе пырать. Йĕри-тавра çăра курăк хушшипе темĕн чухлĕ хĕвел пек сап-сарă чечек шăтса тухнă. Ялта сурăх, качака путеккисем кашни кил картинче тенĕ пекех сиккелеççĕ, таçтанах: «Ме-е-ек!.. Бе-е-ек!..» тени илтĕнет. Сад пахчинче пур йывăç та чечеке ларнă, шап-шурă... Шăрши вара, ай-яй-яй! ытла та паха-çке!.. Çакăн пек чăтма çук илемлĕ вăхăтра Çĕнтерÿ кунĕ çитсе тăчĕ. Майăн 9-мĕшĕнче ирттерекен уяв – Тăван çĕр-шыв Аслă вăрçинчи Çĕнтерÿ кунĕ.*

*Паян ирех Марукăн аслашшĕ района тухса кайнă. Ăна çар комиссариатне чĕнсе илнĕ. Марук, Васук тата Анюк каласса татăлнă пек тĕл пулса вăрмана чечек татма чупрĕç. Шарик те вĕсенчен юлмасть. Ачасем пĕр-пĕринпе çав тери туслă пулнăран, халь виççĕшне те çирĕп сыхлать.*

**Шарик.** Р-р-р! Хам-хам-хам!

**Марук.** Тăхтăр-ха! Кунта акă чĕпĕ йăваран ÿкнĕ! Ăна хăвăртрах шăнкăрч вĕллине хурса ямалла!

**Анюк.** Ай-уй, пĕчĕкскер. Курăрха, уншăн амăшĕ еплерех кулянать. Çийĕн вĕçсе чунтан йыхăрать...

**Васук.** Марук, пар-ха, эпĕ ăна йывăç çине хăпарса халех вĕллене хуратăп.

**Марук.** Ме апла, тыт. Тĕрĕс турăн, Васук. Ашшĕпе амăшĕ савăннипе вĕçе-вĕçе чĕвĕлтетеççĕ, сана тав тăваççĕ.

**Анюк.** Ой!.. Çĕлен!

**Васук.** Ан хăра, Анюк. Эсĕ ăна тивмесен, вăл сана нихăçан та сăхмĕ.

**Марук.** Пăхăр-ха, пăхăр, вăн унта тĕмĕсем хушшипе чĕрĕп чупать!

**Шарик.** Р-р-р! Хам-хам-хам-хам!

**Анюк.** Шарик, ан тив! Санран хăранипе вăл çавра йĕплĕ çăмха пулса тăчĕ.

**Васук.** Тĕрĕс турĕ те. Çапла майпа вăл тăшманран хăтăлма пултарать.

**Марук.** Вăт матур. Атя, чĕрĕп, чуп малалла! Тен, йăвунта сана кĕтсе лараççĕ. *(Кулать).* Ой-ой-ой! Еплерех чупрĕ вăл!

**Анюк.** Эх, вăрманта ытла та лайăхçке! Мĕнле кăна кайăк çук кунта!.. Кашни хăй майлă юрă шăрантарать...

**Васук.** Улатакка та хăйĕн ĕçне лайăх пĕлет. Кунĕпе хупă айĕнчи хурткăпшанка такка-такка кăларса йывăçсем хăрасран сиплет.

**Марук.** Мĕн тери усăллă кайăк... Ой!.. Курăр-ха, мĕн чухлĕ кунта лантăш! Чечекĕ шап-шурă!

**Анюк.** Манăн анне пуринчен ытла лантăш юратать.

**Марук.** Атьăр тататпăр. Эпĕ те асаттепе асаннене паянхи уяв ячĕпе лантăш парнелĕп.

**Анюк.** Эх, манăн мăн асаттепе мăн кукамай вăрçăран таврăнайман çав. Иккĕшĕ те вăрçă хирĕнче пуçне хунă...

**Васук.** Манăн мăн кукамай медсестра пулнă. Вăл, çап-çамрăкскер, бомбăсем, снарядсем хăрушла çурăлнă çĕрте мĕн пур вăйран аманнă салтаксене вăрçă хирĕнчен сĕтĕрсе тухнă. Нумай салтака вилĕмрен çăлнă. Медальсемпе орденсем унăн гимнастерки çинче, хăй тахçанах пирĕнтен уйрăлса кайнă пулсан та, халĕ те хаклăн çуталса тăраççĕ... Кукамай ун çинчен час-часах аса илет. Ăна амăшĕ Берлина çитсен унта пирĕн паттăр салтаксемпе Çĕнтерÿ кунне епле кĕтсе илни çинчен каласа кăтартнисене пĕтĕмпех ас тăвать. Çавăн çинчен халь мана тĕпĕ-йĕрĕпе каласа парса тĕлĕнтерет.

**Марук.** Апла тăк эпир вăрмана килсе çав тери тĕрĕс турăмăр. Хĕвеллĕ Çĕнтерÿ кунĕнче лантăш чечекне татăпăр та киле илсе пырса вазăна лартăпăр...

*Çапла вара ачасем лантăш татса ял еннелле çул тытрĕç. Чи малта Шарик савăнăçлăн хÿрине вылянтарса сиккелесе пырать. Малти урама кĕрсен сыв пуллашрĕç те виççĕшĕ виç еннелле пăрăнса чупрĕç. Марукпа Шарик кил картине кĕрсе тăрсан, Машунь вĕсене курсанах савăннипе пытармарĕ. Крыльца çинчен анса хирĕç ыткăнчĕ.*

**Марук.** Машунь, асатте районтан таврăнчĕ-ши?

**Машунь.** Мяу!

*Марук пÿрт алăкне уçса ярать те пурте пĕр харăс кĕрсе тăраççĕ.*

**Марук.** Ой!.. Асатте! Сан кăкăру çинче çĕп-çĕнĕ медаль! Эпĕ ăна хальччен курман-çке!

**Асатте.** Паян, мăнукăм, манăн калама çук пысăк савăнăç. Палăк патĕнчи ĕмĕрлĕх вут-çулăм умĕнчи митингра республика çар комиссарĕ мана вăрçă паттăрне тесе сумлă медаль парса халăх умĕнче чысларĕ.

**Марук.** Чăнах-и, асатте?!

**Асатте.** Чăнах, мăнукăм.

**Асанне.** Паян пирĕн килте мĕн тери пысăк савăнăç!

**Гоша.** Савăнăç! Савăнăç!

**Машунь.** Мяу-у!..

**Шарик.** Хам-хам!..

**Асатте.** Кун çинчен эпĕ шухăшлама та пултарайман вĕт-ха. Вăрçă пĕтнĕренпе 69 çул çитрĕ. Пур пĕр эпĕ çап-çамрăк ача. Нимĕçсемпе епле çапăçни çинчен документсемпе çирĕплетсе мана чысларĕ ни вăл – тĕлĕнмелле япала! Апла пулсан Тăван çĕр-шывшăн тăрăшни нихăçан та, ниçта та çухалмасть иккен.

**Марук.** Ырă та паттăр асаттеçĕм, эсĕ çак медале тивĕç пулнăшăн эпĕ те чăтма çук савăнатăп. Паян сире иксĕре те уяв ячĕпе саламлатăп, çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатăп. Тата манран лантăш чечекĕсем!

**Гоша.** Саламлатпăр! Саламлатпăр!

**Машунь.** Мяу, мяу, мяу!

**Шарик.** Хам! Хам! Хам!

**Асанне.** Ку юмахри пек илемлĕ, шапшур çеçкеллĕ лантăшсемшĕн тавах, ачам.

**Асатте.** Ку çепĕç лантăш çыххи мана вăрманти партизансен пурнăçне аса илтерчĕ...

**Марук.** Эсĕ унта мĕнле майпа лекни çинчен çав тери пĕлес килет. Каласа кăтартсамччĕ, асаттеçĕм.

**Асатте.** Вăрçă пуçланиччен пĕр эрне малтан эпир, атте, анне, Украинăри чикĕ хĕрринчи тĕлĕнмелле юмахри пек хитре чечек ăшне путнă пысăк яла тăвансем патне хăнана кайнă пулнă. Сасартăк ир-ирех нимĕç фашисчĕсем тапăнсан... Ах, аса илме те хăрушă-çке... Эпир унтан ниепле те тухса кайма ĕлкĕреймерĕмĕр. Тăшмансем çÿлтен бомба пăрахса çĕре кисретни, пирĕн хыççăн танксем пырса халăха пере-пере вĕлерни халĕ те куç умĕнчех...

**Марук.** Эсĕ ун чухне миçере пулнă?

**Асатте.** Вун тăваттăра. Хальхи пек ас тăватăп: чĕрĕ юлнисем пур вăйран вăрман еннелле чупатпăр... Эпĕ пуринчен малта. Снаряд çурăлса кайрĕ те ман хыçрисем сирпĕнсе çавăнтах вилсе пĕтрĕç. Унта анне те, унăн тăванĕсем те... Тата аттене уринчен персе амантнă пулнă. Эпĕ ăна хăтарма тесе хирĕç ыткăнасшăнчĕ, анчах та вăл мана: «Тар, ывăлăм, тар хăвăртрах!...» – тесе чунтан кăшкăрать. Пĕр палламан ар çын алăран ярса тытрĕ те вăрмана пуля пек чупса кĕтĕмĕр. Çаврăнса пăхма ĕлкĕртĕм кăна, аттене пĕр нимĕç çитсе персе те вĕлерчĕ... Эпĕ ниçта кайса çитейменнипе: «Атте-е-е!» – тесе кăшкăрса ятăм. Палламан çын мана: «Шăп пул... Пирĕн тарса ĕлкĕрмелле...» – терĕ, унтан малтан-мала, шалтан-шала талпăнтăмăр. Тавах Турра, нимĕçсем пире ниепле те шыраса тупаймарĕç... Николай Петровичпа эпир нумай вăхăт хушши вăрмантан тухмасăр çÿрерĕмĕр. Кашни кунах çапла тарса хăтăлнă çынсемпе тĕл пулса пĕрле партизансен ушкăнне йĕркелесе ячĕç. Ертÿçи – Николай Петрович. Çапла вара партизан отрячĕ нче эпĕ чи çамрăкки пултăм. Час-часах нимĕçсен ушкăнĕсене тапăна-тапăна вĕсен хĕç-пăшалне тытса илсе, курайми тăшмана тавăрма тытăнтăмăр. Мана кашни кун тенĕ пекех заданипе тĕрлĕ станцисене яратчĕç. Нимĕçсем поездпа миçе танк хăш еннелле ăсатса ярассине, хăш вăхăтра каяссине пĕлме тата нумайнумай ытти те... Эпĕ çĕтĕк-çатăк тумпа чĕлхесĕр ыйткалакан ача пек пулса çÿреттĕмччĕ. Юнашар перес-тăвас пулсан та шăпăрт, илтмĕш пулма малтанах лагерьте вĕрентĕм. Николай Петрович мана час-часах мухтавлăн лăпкаса: «Эсĕ пирĕн партизан отрячĕн паттăр ывăлĕ, – тетчĕ. – Хушнă ĕçе вăхăтра пĕлтерсе тăнăшăн тав. Кирлĕ çĕрте взрывчатка хума ĕлкĕрни – пирĕншĕн калама çук пĕлтерĕшлĕ...» – тетчĕ.

**Марук.** Эсĕ, асаттеçĕм, çав тери хăюллă, маттур пулнă çав... Нимĕçсем хушшинче пĕр-пĕччен çÿреме хăрамастăнччĕ-и?

**Асатте.** Манăн аттепе анне куç умĕнчех тĕп тунăшăн, эпĕ вĕсене чун-чĕререн кураймастăм. Çавăнпа та пулĕ пĕр хăрамасăр татах та хăватлăн тавăра-тавăра вĕсене пирĕн Раççей çĕрĕнчен хăвăртрах тасатас килетчĕ...

**Асанне.** Пĕррехинче нимĕçсем аслаçуна йĕрлесе пырсан, вăл хăраса ÿкмен. Ун çинчен те каласа кăтарт-ха...

**Марук.** Сана вĕсем ăçта йĕрлерĕç? Станцинче е вăрманта?

**Асатте.** Ку ĕç вăрманта пулса иртрĕ. Эпĕ ун чухне заданирен таврăнаттăм. Ман хыççăн майĕпен мотоциклпа виçĕ нимĕç йĕрлесе пынине сиссен, çаврăнса пăхмарăм, хама-хам алла илсе, илтмĕш пулса татах та малалла ерипен утса пыратăп. Кусем ахăра-ахăра мана хыттăн сигнал та парса пăхаççĕ, «Хенде хох!» – тесе те кăшкăраççĕ, сывлăша переççĕ. Эпĕ пурĕ пĕр хăнк та тумастăп. Ним пулман пек кăшт сылтăм енне пăрăнса çырла татса çиме пекки тăвататăп. Хамăн хăранипе чĕрем кĕç-вĕç сиксе тухас пек тапать. Вĕсем кăшт иртсе кайсанах тытрăм та пĕтĕм вăйран вĕсем çине граната ывăтрăм. Çавăнтах мотоцикл ÿпенсе кайрĕ, ларса пыракансем тÿрех ик еннелле сирпĕнчĕç. Кÿмере нимĕç генералĕ пулнă иккен. Вăл тăнне çухатнă, пуçĕнчен юн юхать... Эпĕ чупса пырса автомачĕсене пуçтарса хам çине çакрăм. Кĕсьерен кантра кăларса генерал аллине хыçалалла çавăрса çыхрăм, çăварне пăкăларăм. Мотоцикла аран-аран тĕксе тăратрăм та хăпарса ларса партизансен лагерьне çил пек вĕçтерсе çитрĕмĕр. Генерал тăна кĕрсен мана тÿрех палласа илчĕ. Пуçне енчен-енне сулласа тем çинчен çав тери тарăхса шăл витĕр пăшăлтатрĕ: «Ухмахсем, сана çавăнтах персе вĕлермелле пулнă...» – терĕ пуль. Унра питĕ вăрттăн пакет пулнă иккен.Уншăн савăннипе партизансем мана тытрĕç те çÿлелле ывăтаççĕ кăна: «Ванька, маттур! Маттур, Ванька!» – теççĕ.

**Марук.** Юратнă асаттеçĕм, эсĕ пирĕн чăн-чăн вăрçă паттăрĕ иккен!

**Гоша.** Вăрçă паттăрĕ! Вăрçă паттăрĕ!

**Машунь.** Мяу-мяу! Мяу-мяу!

**Шарик.** Хам-хам! Хам-хам!

**Асатте.** Ахальтен мар пулĕ сана паян медаль парса чысланă.

**Марук.** Эсир çапла паттăррăн çапăçма пултарнипе кăна çав тери хăвăрт, ирсĕр тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпе çĕнтернĕ те.

**Асанне.** Тĕрĕс, мăнукăм. Ун пек хăрушă вăрçă тек ĕмĕрне те ан пултăрччĕ. Малашне мирлĕ, туслă пурăнасчĕ.

**Асатте.** Çапла пултăрччĕ.

**(Малалли пулать).**

# Хаваслă 2014 самант

## «Чăваш алфавичĕ» сăмах каçмăш




1. СССРти иккĕмĕш космонавт летчик. 2. Урапа тĕнĕлне сĕрмелли шĕвек. 3. Ял хуçалăх машини. 4. Электронлă лампа. 5. Пысăк шыв лаптăкĕ. 6. Йывăç. 7. Хими элеменчĕ. 8. Металл. 9. Сĕтрен хатĕрленĕ çимĕç. 10. Çуна пайĕ. 11. Елчĕк районĕнчи ял. 12. Ăру, несĕл, ăрат. 13. Тĕпсĕр кӳлле чул ятăм (туп.юм.). 14. Хĕллехи тумтир. 15. Çут çанталăкри пулăм. 16. Чăваш Республикинчи район центрĕ. 17. Сĕтел-пукан. 18. Вăхăт виçи. 19. Раççейри халăх. 20. Урапа пайĕ. 21. Ӳсен-тăран пайĕ. 22. Ура тăли кантри. 23. Савăт-сапа. 24. Кăларăмри пичет продукцийĕн хисепĕ.




1. Чăваш халăх поэчĕ. 2. Мăйраки шалта, хӳри тулта (туп.юм.). 3. Пĕрчĕллĕ культура. 4. Хуралтă юпписем çине вырнаçтарнă вĕрлĕк, пĕрене. 5. Китайри халăх. 6. Хăймине уйăрнă сĕтрен пулакан çимĕç. 7. Апата тутă кĕртмелли шĕвек. 8. Пăявран тунă ункăллă лаша тытмалли шăчă. 9. Ĕлĕкхи Раççейри кавалери çарĕн салтакĕ е офицерĕ. 10. Апат çисен, начар ... та выртса каннă тет (ват.сăм.). 11. Пӳрт-çурт пĕрени. 12. А.Емельянов çырнă «Хура çăкăр» повеçри сăнар. 13. ... ути (хиновник). 14. Шут хисепĕ. 15. Чăваш наци кĕпин пайĕ, кĕштек. 16. ... çулĕ шуçланкă (ват. сăм.). 17. Йывăç çăра уççи. 18. Тĕнче ...ĕ (космос). 19. Ю.Скворцовăн «Сăваплă вут» повеçĕнчи сăнар. 20. Уйра ӳсекен ыхра. 21. Чăваш халăх эпосĕ. 22. Н.Терентьев çырнă «Хумсем çырана çапаççĕ» драмăри сăнар. 23. Чăваш сăвăçи. 24. Ут таврашĕ.




1. ... ӳкерет, хастарлăх хăтарать (ват.сăм.). 2. «Чуччу» сăмахăн тепĕр ячĕ. 3. Организм пайĕ. 4. Кӳренӳ. 5. Вĕçекен хурт-кăпшанкă. 6. Вун икĕ вĕлле хуртçăм пур, çуллен çăвăр хушманшăн ...ĕм пур (хал.сăм.). 7. ...лĕх (успешность). 8. ...пыр (возрастать, увеличиваться). 9. Кашкăр пулăшсан, вăрăм туна та лашана ...ет (ват.сăм.). 10. Арланă çип виçи. 11. ...-ларан (растительность). 12. ... çыншăн тĕнче тикĕс (ват.сăм.). 13. Çитĕнӳ, прогресс. 14. ...-тăран (растение). 15. Ĕмĕт тatăлни, шанăç пĕтни. 16. Пуласлăх, малашлăх. 17. Хĕрлĕ кĕнекене кĕртнĕ çĕрлехи вĕçен кайăк. 18. Ӳсен-тăран. 19. ...-сӳрĕк. 20. ...ăйăр (вата). 21. Лашан е ытти кӳлекен выльăхăн хырçи. 22. «Чĕрĕ, çивĕч, йӳрĕк, йăрă» синонимсен ретĕнчи тепĕр сăмах. 23. ...-тирлĕ. 24. Кам варĕнче ...се пулса \Кам кăкрине çисе ӳсрĕн-ши? (Н.Шелепи).

## Çĕр-шыв тата тĕп хуласем



1. Колумби тĕп хули. 2. Канада тĕп хули. 3. Япони тĕп хули. 5. Австри тĕп хули. 6. Иордани тĕп хули. 7. Нигер тĕп хули. 8. Турци тĕп хули.

**Хуравсем тĕрĕс пулсан, паллă тунă йĕркере Африкăри çĕр-шыв ячĕ вуланĕ.**

## Ребус




Н.Ашмарин словарĕнчи тупмалли юмах вуланĕ. Тупсăмне тупăр.

*Юрий ФРОЛОВ* (Шупашкар) **хатĕрленĕ.**